Пӗтӗм тӗнҫери ҫухӑнсем, пӗрлешӗр!

№ 2. 1919 ҫул. НАРС (ФЕВРАЛЬ) УЙӐХӖ.

Хресҫен ӗҫне вӗрентекен журнал

# ҪӖР ӖҪЛЕКЕН

Совместное издание Земельного отдела и Чувашского отдела Казанского Губер. Совета Р. К. и К. Депутатов.

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.



Пӗрӗмӗш ҫул тухаҭ.

Пӗр нум. 1 т. 60 п.

**Журналӑн хакӗ:**

| | | |
|---|---|---|
| 12 | уйӑха . . | 18 тен.—п. |
| 9 | „ . . | 13 „ 50 п. |
| 6 | „ . . | 9 „ — |
| 3 | „ . . | 4 „ 75 п. |
| 1 | „ . . | 1 „ 60 п. |

**Редакципе кантурӗн**

адресӗ:

г. Казань, Вознесенская ул., дом № 20 Губчувотдел журнал „ҪӖР ӖҪЛЕКЕН“.

Редактор *А. Т. Быков.*

Казань. Третья Государствен. типография

# 1919 çулта хресҫен ĕçне вĕрентекен журнал

# „ÇĔР ĔÇЛЕКЕН“

## кашни уйăхра пĕр хут 48 страницăллă тухать.

**Хусан кĕпĕрнинҫи Ĕçл., Хресҫ., Хĕрлĕ-ç. Депутаҫĕсен Совеҫĕ çумĕнҫи çĕр ĕçне тăвакан Пайĕпе Ҫăваш Пайĕ кăларакан журнал.**

---

Хусан кĕпĕрнинҫĕ çĕр ĕçлесе пурăнакан халăхшăн сельско-хозяйственный журнал кăларма пит кирлĕ. Çĕр ĕçне туса тăракан пайĕпе (земотдел) Ҫăваш Пайĕ хăйĕн „Çĕр Ĕçлекен“ йатлă сельско-хозяйственный журнала кăларса,—çĕр-шыва лайăхрах ĕçлесе пурăнаçа йепле йусамаллине халăх хушшинҫе вĕрентсе сарасшăн.

Журнал çине тырă пулă акса тăвасси çинҫен тата пурăнаçра кирлĕ ытти йапаласем çинҫен пурне те тăнламалла ҫĕлхепе çыраççĕ (программа çине пăх). Вырăнсенҫи (йалсенҫи) тырă-пулăсем çинҫен, йепле халăх пурăнни, вĕсен мĕнле нушасем пурри çинҫен те çыраççĕ.

### Журнал çине мĕн çинҫен çыраççĕ (программа).

1. Вĕрентсе калакан статйасем.

2. Уйрăмăн тĕрлĕ ĕçсем çинҫен вĕрентсе çыраççĕ: а) Тырă-пулă акса тăвасси, б) Вăрман хура çинҫен, в) Выҫăх—ҫĕрлĕх усрасси, г) Кӳлĕсем туса пулăсем ӳстересси, д) Килте кирлĕ йапаласем: сат, пахҫа, карта-хура, сĕт-çу-шур, ҫăх-ҫĕпĕ, хур-кăвакал çинҫен, е) Выҫăх- ҫĕрлĕхе ҫирсенҫен сыватасси, ж) Тырă пулă акса пухмалли машшинăсем, хатĕрсем, з) Пӳрт-çурт тума пĕлесси, и) Пурăнаçа хăпартасси—с.-х. коммунăсем, упкăнсем, ерттелсем, к) Пурăнаçа йусас тĕлĕшрен хисепленисем, л) Йалсенҫе ĕçлекен йапаласене йусама урăхларах ĕçлесси, м) Халăх сывлăхне сыхласси çинҫен.

3. Пурăнăçра çĕнĕрен мĕн пулнисем çинҫен (хроника).

4. Тĕрлĕ çĕртрен пĕлтерсе çырни (корреспонденции).

5. Пурăнаçа йусама вĕрентекен журнала майлă çыракан кирлĕ кенекесем, журналсем çинҫен кĕскен каласа пани.

6. Çĕр-шыва ĕçлеме вĕрентекен кĕнекесем, брошурасем, журналсем, картинккăсем, мĕн пур с.-х. майлă тухнă йапаласенҫен лайăхраххисене кăтартса çырни.

7. Журнала вулакансем ыйтса çырни, вĕсене хирĕç ăста çынсем каласа çырни.

8. Хутăш: кĕрик мĕн çинҫен кăтартса кĕскен çырнă статйасем.

9. Редакцине йаракан çырусем.

10. Йалти çынсене çĕр ĕç тĕлĕшпе кирлĕ йапаласем çинҫен пĕлтернисем.

*Редакция.*

1919 çул. **ÇĔР ĔÇЛЕКЕН.** № 2. НАРС уйăхĕ.

## Суха ĕçне йалпа пĕрлешсе тавассипе ерттелсем çинђен.

Пĕттĕм çĕр халăха йулђĕ, ĕнтĕ ирĕклĕ халăх çĕр ĕçне хăйне йевле кирлĕ, çапла туса тăма пултарать... Анђах пурăнăçра апла мар: ирĕклĕ çĕре ирĕккĕн ĕçлесе тăма кансĕрлекен майсем пит нумай. Çĕре вакласа пайлани, сапаласа валеçни, йалпа кĕрмĕшни (çĕре йалпа тытса тăни) çĕр ĕçне ирĕккĕн туса тăма пит кансĕрлет. Ђăнах та çĕр ĕçне вĕрентекен паукка калана пек ĕçлесе тăрас тесен çав кансĕрлекен йапаласене пĕтĕмпех пĕтерес пулать.

Ђăнахах та: пирĕн пур çĕрте пекех пусса (уйа) виçĕ пайа уйăрса ĕçлесе пурăнаççĕ, вара виçĕ пайран пĕр пайĕ усăсăрах выртса иртерет, тата çултан-çула пĕр тĕслĕ тырах акса пурăнаççĕ, тĕрлĕ курăк улăштара-улăштара акса çĕрĕн вăйне çĕнетмеççĕ, унтан тата пурăнăçа аслатма пит кирлĕ выђăх йуратакан курăксене, кăшман таврашне акса, лартса тума тăрăшмаççĕ, майĕ те çук.

Ку сăмахсене хирĕç: йалпа килĕшсе, вĕрентнĕ пек ĕçлесе тăрсан ку çĕр ĕçне тӳрлетсе йама та пулать-çке, теме те йурать пек. Анђах тума тăрсан йывăртарах, мĕншĕн тесен пур çынсене те ăвлантарса çитерсе халăхпа килĕшесси хăш ђухне пулмасть те. Йалпа мĕнле те пулин килĕшсе çитсен те вара йал çĕрне миçе пусă тума шутланă, çавăн ђухлĕ татăк туса касас пулать, унтан кашни уйа йат тăрăх пайласан çĕре ытларах вакласа ана татăкĕсене сапаласа пĕтермелле пулать, хай ĕç вара ĕлĕкхинђен те нађара кайать.

Йат çĕрĕссне татăкăн-татăкăн туса сапаласа пĕтерни пĕр йенђен (ансăр, кĕске анана) ĕçлеме те кансĕр, пĕр ана çинђен тепĕр ана çине куçса çӳресе вăхăта та нумай иртерет; тата тепĕр йенђен ун пек пĕђĕк анасене пысăкрах машшинăсемпе ĕçлеме май та килмест. Вак анасем çинђе тыра выракан, йе кĕлте çыхакан машшинăсемпе ĕçлеме пулмасть, лашасăр пăспа сухалакан трактăрпа, машшинă акапа унта пырса та ан кĕр. Хăш çĕрте анасене çав тĕрлĕ ансăр туса пĕтереççĕ, тыра акакан машшинăпа çавăрăнкаламалăх та çук. Ун пек ансăр анасене акма май килтĕр тесе çав тыра акакан машшинăсене пĕђĕккĕлетсе кĕске йешђĕклĕ тупă сейăлкăсем те пур, çапла Фиђвертпа Дедин савăтĕнђе кăларнă „крестьянка" йатлă сейăлкă та пур, анђах ун пек пĕђĕк машшинăсемпе ĕçлени ĕçе пиђ ӳсĕмлех тумасть, пысăк машшинăпа акнă хушăра унпа нимĕн ђулах та акаймастăн.

Тата виççĕмĕш, килĕшӳсĕр ĕç—çĕре ђас-ђас валеçни. Ана хуçи хăй апи хăйĕн аллинђе нумайах тăрас çуккипе пĕлет те уншăн тăрăш-

ҫах та каймасть, тислӗк (навус) тӑкасшӑн та ҫунмасть, тарӑнтарах сухаласа, ҫемҫетерех парасшӑн та, усал курӑксен тымарӗсене пӗтерессшӗн те тӑрӑшмасть. Ҫӑнах та, вӑл пайан-ыран ҫӗр валеҫессине, хӑйӗн ырӑ анине урӑх ҫынсене туртса илсе парассине пӗлет те, мӗншӗн вӑл тата уншӑн тӑрӑштӑр, пурӗ-пӗр хӑйне пулмасть, унпа такӑш тепри ырӑ курмалла пулать.

Ҫапла, халӗ калаһинҫен ешир ҫӗр ӗҫне ӳсӗмлӗ, пайталлӑ туса тӑма кансӗрлекен майсене (хирӗҫле йӗркесене) пӗтерме пит хытӑ ҫине тӑрас пулать.

Малтан (иртнӗ ҫулсенҫе) ҫӗр ӗҫне хуттӑрлӑ, атрушпа ӗҫлесе тӑрсан майлашать тесе шухӑшланӑ. Ҫынсене тивӗҫлӗ ҫӗре харпӑр-хӑйне уйрӑм вырӑна ӗмӗрлӗхе каса-каса панӑ. Ун пек хуҫаланнӑ ҫынсем нумайӗшӗ харпӑр-хай ҫӗрне вӗреннӗ ҫынсем кӑтартнӑ пек, хал ҫитнӗ таран тӳрлетсе йама, усӑ кӳрекен тума тӑрӑшнӑ. Ҫапласав, пӗр ҫын тӑрӑшсан та, ӗҫ йапалисене (хатӗрсене) пурне те туйанса ҫитерме пултараймасть, ун пек хуттӑрсене, атрушпа пурӑнакансене хысна пулӑшкаласа тӑнӑ пулсан та, вӗсем ытти хресҫенсенҫен темӗн ҫул малах иртсе кайаймарӗҫ. Ҫапах та хӑш ҫухне нумайӗшин тыррисем ахаль ҫынсеннинҫӗн лайӑхрах пулкалаҫҫӗҫ, хӑшӗн питех те лайӑхрах пулаҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, ҫӗр ӗҫне кун пек ӗҫлесе тӑни те ҫӑн йӗркеллӗ туса йараймарӗ.

Кунсӑр пуҫне тата, ҫӗр хуттӑра, атрупа уйӑрса пӗтерни халӑхи саккуна хирӗҫ пырать, мӗншӗн тесен халӗ ҫӗр пуҫлӑхӗ халӑх хӑй, никам та ҫӗре пайӑн-пайӑн уйӑрса илсе хуҫа пулса ларма пултараймасть, ҫӗре тӑрӑшакан ҫынна вӑхӑтлӑха анҫах парса тӑмалла.

Ҫавӑнпа ӗнтӗ ҫӗре йепле тӳрлетсе йарасси ҫинҫен халӗ урӑхла шухӑшламалла. Ҫӗнӗ майпа ҫӗр ӗҫне аванлатса йамалли йӗркесем ҫиллай.

Пуринҫен ансатраххи—ҫӗр ӗҫне йалпа пӗрлешсе туни. Кунта йалти халӑх пӗтӗм ҫӗрне пӗр йыш пек килӗшсе ӗҫлет, вара тырӑ пуллипе ҫуп тӑрӑх валеҫет. Ку капла ерттелленсе ӗҫленӗ маперлӗ, анҫах ерттелпе туслашнӑ ҫынсем анҫах пӗрлешсе ӗҫлеҫҫӗ, кунта пӗтӗм йалти халӑх ӗҫлет. Капла тусан ӗҫ ӑнас пек, анҫах кунӑн кансӗр йенни те пур, мӗншӗн тесен, пӗтӗм халӑхпа килӗштерсе ҫитересси пит йывӑр: йалта тӑрӑшса ӗҫлемен йулхавсем те пур, тата ӗҫленӗ-ӗҫлемен пурӑнса йанттипе пӑхакан кутӑнсем те пур. Ҫавӑн пеккисемшӗн нумайӗшӗ тарӑхса, йатлаҫса, вӑрҫса кайма та пултараҫҫӗ. Аслӑ йалсенҫе, халӑх пит нумай та, суха ӗҫне йалпа тӑвасси пушшех хӗн. Ҫапах та халӑхпа ӗҫлени пит лайӑх, ӳсӗмлӗ ӗҫ. Йалпа пысӑк машшин туйанса ӗҫе ҫас туса пӑрахма пултарать, уйрӑм ҫын пӗҫҫен муталанса тӑнӑ пек мар.

Суха ӗҫне пӗтӗм йалпа тума ытлах та май килмест пулсан, пӗр кӑмӑллӑ ҫынсен ерттелленсе ӗҫлеме тытӑнма йурать. Темиҫе йыш килӗшеҫҫӗ те, уйри ӗҫе пӗрле тӑваҫҫӗ. тырри пуллине вара ҫӗр виҫи

тӑрӑх валеҫсе илеҫҫӗ. Ку йалпа ӗҫлени пекех, анҫах йышӗ сахалтарах кӑтартать. Йалпа ӗҫленӗ ҫух пӗтӗм йалти ҫынпа ирӗксӗрех пӗр ӗҫе тутарас пулать, ерттел туса ӗҫленӗ ҫух унта ҫун туртнипе килӗшсе пӗрлешнӗ ҫынсем анҫах йереҫҫӗ, ҫавӑнпа ерттел ӗҫне йалпа тунӑ пек мар, ҫӑмӑлтарах тапратса йама пулать. Анҫах ерттел ӗҫӗ халӑхӗнҫен тытӑнҫӑксӑртарах: халӑх ерттел ҫӗрне валеҫсе йама пултарать, ерттелӗн вӑйӗ те халӑхӗнҫен кайарах, ҫавӑнпа ерттеле суха, аван машшинӑсем туйанма та йывӑртарах.

Ҫавах та ерттелленсе ӗҫлени халӗ кашни ҫын уйрӑм ӗҫлесе пурӑннинҫеп усӑллӑрах.

Малашне ӗнтӗ, ҫӗр ӗҫне йалпа пӗрлешсе ӗҫлеме тытӑнайман ҫӗрте, ушкӑн-ушкӑнпа килӗшсе—ерттелленсе те пулин ӗҫлеме пуҫлӗҫ, ҫапла вара пурӑнӑҫ йӗрки коммунӑ тийекен пурӑнӑҫ патнелле ҫывхарса пырӗ. Коммунӑ ҫинҫен тӗплӗрех каласа ӳлӗмрен ҫырӑпӑр.

# Ҫӗре йалпа пӗрле ӗҫлесе усӑ курасси.

*В. Д.*

Ҫӗрӗн тӗп йӗрки саккунӗ тӑрӑх (1-мӗш ст.) ҫӗр, унӑн ӑшӗнҫи пурлӑхсем, шывсем, вӑрмансем мӗн пур Рассей Респупликкин ҫӗрӗ вӑйӗсем уйрӑм ҫынсен ӗмӗрлӗхе пулма пултармаҫҫӗ. Малалла ҫав саккунрах каланӑ: ҫӗрпе харпӑр-хӑй ӗҫлеме пултаракан ҫынсем пур те усӑ курма пултараҫҫӗ, тенӗ. Анҫах та капла каланипех ҫитмест. Ҫӗре пур те пӗрле тытса, пӗр пекрех валеҫсе, пӗр пек усӑ курнипех ҫитмест, ӑна пӗрлешсе ӗҫлесе пур те пӗр тан усӑ курмалла тӑвас пулать. Кӑна икӗ тӗрлӗ тума пулать: пӗр майли, ӗлӗкхи улпутсен ҫӗрӗсене пӗрлешсе ӗҫлесе; тепӗри—ҫӗр ӗҫлемелли коммунӑсем туса. Совет правительстви ҫапла тума мӗн пур вӑйӗпе тӑрӑшать. Хаҫхи вӑхӑтра мӗн пур ҫӗр-шыв харпӑр-хӑй тӑрӑшса ӗҫлекенсен аллинҫе ҫухне, ӑна пурпе те танаштарса валеҫнипе анҫах мар, социализӑм кӑтартнӑ пек пурин те пӗрлешсе, мӗн пур ӗҫлеме пултаракан вӑйсемпе ӗҫлеме тытӑнмалла.

Рассейра хресҫенсем ҫӗрпе пӗр майлӑ, упҫӑпа, йалсемпе вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн ҫунран йе, йат тӑрӑх валеҫсе пурӑнаҫҫӗ. Кун ҫинҫен ҫырма та кирлӗ мар, мӗншӗн тесен кашни хресҫенех лайӑх пӗлет. Малалла кӗскен те пулин ҫав упҫӑпа йе, йалпа пурӑнни ҫинҫен пӑхӑпӑр: ҫи малтанах пӑхӑпӑр, упҫӑпа пӗрле ҫӗре тытса тӑрсан ҫӗре вис пусӑллӑ анҫах тунипе, ӑна урӑх майлӑ кирлӗ пек ӗҫлемелле мар. Сӑмахран калӑпӑр, хӑш-хӑш хресҫенсен хура пусӑри хӑйсен анисем кӗтессине ҫӗрулми йе, хӗрлӗ кӑшман (ҫӗкӗнтӗр) лартасшӑн пулӗҫ, анҫах та кӑна тума пултараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ҫӗр йалпа пӗрле.

Выҫӑхсене усрама ҫаранлӑх вырӑнсем ҫук пирки вӗсене хура пусусенҫе усраҫҫӗ, ҫавӑн пек анисем ҫинҫе хресҫенсем йепле ӗнтӗ

çĕр-улмисем ларђĕр вара? Ун пек лартнă йапалана пĕр кун хушшинђех выђăхсем пĕтерме пултараççĕ. Акă татах калăпăр: пĕр-пĕр çын хăйĕн çур-тыри çине кайăк-пуç акнă; ăна çулса пухмалли вăхăт çитрĕ, ăна пухма вăл пултараймасť, мĕншĕн тесен унăн ани йĕри тавра анђах пулма пуçланă сĕлĕ акнă; çавăнпа та вăл ирĕклĕ-ирĕксĕртенех çав пит усăллă кайăк-пуçне акаймасť те халăх мĕн акаť, çавнах акаť. Кун пек тупса калама темĕн ђул та пулаť.

Иккĕмĕш—çĕре упђăпа тытса кашни çын хăйне уйăрса илнипе пурăнăçа (хозяйствă) йусама ђараť. Калăпăр: хăш-хăш хресђенĕн ани шыва кайнипе (шыв тăнипе) аптăраť, ăна типĕтме пит çăмăл: канав ђавса анђах йамалла, çитет те. Çак ĕçе пĕр çын йе, иккĕн-виççĕн тума пултараççи? Çук, пултараймасť, мĕншĕн тесен хăйĕн ани ансăрипе йе, пĕђĕкипе вăл канава хăйĕн кӳршсем (йунашар) анисем çинђен те ђавас пулаť, кӳршисем апла тума памаççĕ, ђăнăх та çакăн майлă нумайĕшĕ пулаť.

Малалла тата, çĕрпе уйрăм-уйрăм усă курнă çĕртре ђи пысăк сийен, ку—анасене вакласа сапăтни пĕтерет. Ун пирки пĕр ана çинђен тепĕр апа çине куçса çӳресе мĕн ђул вăхăт иртет, вырăнсăртан ĕшенетĕн (ывăнатăн), сахал мар тăкак куратăн. Пĕр анаран тĕпĕрне уйăрса, йăрансем туса темĕн ђухлĕ лайăх çĕр сайа кайаť. Йăрансем çумĕнђе тырăсем нађар, кĕске пулнине пур те сăнанă пулĕ*).

Тата анасем калама çук ансăрри çинђен те каламасăр ђăтма çуках. Вĕсем çинђе лайăх машшинăсемпе, хатăрсемпе ĕçлеме май çук, акă калар: тырă акмалли, вырмалли, утă çулмалли; лашасăр пăспа ĕçлекен плукпа тарăпрах сухаласа çĕре çĕмçетме те çук. Тата çав ансăр анасем меслетçĕр пит вăрăм ђăсăлса выртаççĕ, вĕсем çине навус тăкнă, кĕлтесене пухнă ђух ахалах вăхăт иртет.

Çĕре пĕрле, пĕрлешсе ĕçлесен малта каланисенђен пĕтĕмпех урăхла куратпăр. Малтанах калăпăр, çĕре пĕрлешсе ĕçлесен пусăсене кирлĕ пек ылмаштарса ĕçлеме пулаť; иккĕмĕш йенђен, çĕре лайăх машшинăсемпе ĕçлеме май пулаť. Малалла, ушкăнсем ытларах вăйпа çĕре-шыва пур йенђен те йусама пултараççĕ. Çапла çĕре пĕрле, ушкăнпа ĕçлесен йăрансем, çулсем, ђикĕсем туса тата сухаламасăр хăварса çĕре сайа йамаççĕ.

Анђах кунта та каллех ыйтас пулаť: харпăр хăй килте тунă суха пуçпе, ака пуç, хăйĕн хăпарса тухнă алли выйĕпе, лаши вăйĕпе анђах ĕçлепĕ çын, çывăхрах пасарлă йалтан, хăй йалĕнђен, анинђен инђе кайман, мĕн пур ĕмĕрпе пĕр вырăнта хăйне майлă çынсем хушшинђе пурăпса, çырува пĕлекенисем пулсан та çулталăк хушшинђе хăйсен йађĕсене алă анђах пусаканскерсем çĕр ĕçлес ĕçе аванлатса, йусаса, хăпартса йама пултарĕç-ши? Çапла ĕнтĕ, ĕлĕкхин пек пĕр майлă пурăпакан çынсем пултараймаç, тесе кăна тӳрех ка-

*) Йăрансем, йепле сийен кӳнине малалла ытлараххăн, тĕпĕ йĕрĕпе çырăпăр.

Редакция.

лама пулать. Манас пулмасть, хресчене ĕлĕкрепех пĕр майлă шăнсаларнă йапала пек, авалтанпа пыракан йăласемпе пурăннипе, вăл пурăнăçĕнче нимĕн лайăх вĕрентекен, лайăхлатнă пурăнăç та курман, нахăçтан вĕренме те пуман тесе, калама çук. Хресченсем хăйсем тĕнчере пурăнма пуçласа, çак вăхăтченех хăйсен ăсĕсене тĕрлĕрен кирлĕ мар йăласем шухăшласа кăларса, пулас çук йапаласене ĕненсе, вĕсене пăхăнса, вĕсенчен хăраса пурăннă. Калама çук ирсĕр таса мар пурăнăçпа, нимĕн канма пĕлмен йăвăр ĕçпе пурăнса нихăш йенчен те вĕсен хушшинче çĕнĕрен вĕрентекенсем, пуçарса йаракансем пулман.

Ака ĕнтĕ, çав пур йăнăшсене, ĕлĕкренпе çухатнă пурăнăçра кирлĕ йапаласене тавăрма йалсенче вĕреннĕ çынсен, агрономсен, пур ĕçе ăста пĕлекен çынсен вырăнсенчи халăха вĕрентекен учиттелсемпе тата пур ăслăрах çынсем ĕçлеме вĕрентме çанăсене тавăрсах тытăнас пулать. Вĕсем анчах, çав ĕмĕрхи халăха хупласа тăнă тĕттĕме хуса йарса, лайăх пурăнăç çынна кирлĕ пек тума пултараççĕ, кун пек пурăнăçа çĕре-шыва пĕрлешсе ушкăнпа çав вĕреннĕ çынсем йертсе пынипе анчах тума пулать.

Çавăнпа та пĕр тăхтамасăр çав вĕреннĕ çынсене пухма, хресченсене çак çĕнĕ йĕркесене вĕрентсе, вĕсен пурăнăçĕсене хăпартса йусама тытăнмалла.

## Хусан кĕпĕрнинче тырă пулă акасси çинчен.

Пирĕн халĕ Хусан кĕпĕрнинчи тырă пулă акса тăвакан йăла уйар çулсенче çĕре нӳрĕ тытма пулăшмасть, çавăнпа вăл тырă пулăсене çумăр сахал çунă çулсенче лайăх ӳсме памасть. Кунта тырă пулă акса тăвакан çынсем тырă ӳснĕ вăхăтра çумăр çăвасси çине анчах шанса акаççĕ: чăнах та лайăх çумăрсем çунă çул, тырăсем хăш чухне питех те аван пулаççĕ. Анчах пирĕн хутра халчи саманара



Еретен акакан машшина.

уйар çулсем нумай пулаççĕ, хăш-хăш чухне тырă ӳсмелле вăхăтра çумăр пĕррете çумасть, çавăнпа тырă лайăхрах пултăр тесен, уйар

çанталăкпа пĕтсе ан лартăр тесен, пирĕн урăх майлă ĕçлеме тытăнас пулат̆, çĕре нӳрĕ тытмалла тăвас пулат̆, тата çĕр нӳрри ахаљ мар, тырăшăн усăллă пĕтмелле тăвас пулат̆. Мĕнле тумалла ха ăна? Ăна ĕређĕ ĕређĕ акнă майпа (рядовая культура хлебов) тума пулат̆: çапла аксан çĕр нумайђен нӳрĕ тытат̆, тата тырă пулă та ирĕклĕ (нормально) ӳссе пулса çитет.

1911 çулта, çанталăк нумайђен уйар тăнăран. Хусан кĕпĕрнинђе тырă пит пађар пулђĕ, анђах Хусанти çĕр ĕçне вĕрентекен шкул (Земледельческое Училище) акнă уйсенђе (Капан кӳлĕ хыçĕнђе) тырă çапах аван пулђĕ, уйар çанталăк та ђараймарĕ. Çав уйсенђен çапах тырă теçеттинран çитмĕлшер пăта йахăн илђĕç, йунашар хресђенсем акнă уйсенђен вăрлăхĕ те аран аран тухрĕ.

Ĕрђĕ ĕређĕпе акассине, йе алпа, йе лашапа турттаракан акмаллипе (сеялка) акма пулат̆. Ăна вырăсла „рядовая сеялка" тĕççĕ. Вăл акмаллин йешђĕкĕ пур (семянной ящик), çав йешђĕкрен кăларса ывăтаканнипе вăрлăх пăрăх (трубка) тăрăх кайса, суха тимĕрĕ пекки çине анса суха касси çине выртса пырат̆. Касăри вăрлăхсем касă айăкинђен йухса анакан тăпрасемпе витлешсе пыраççĕ. йе тата акмалли хыçне тимĕр ункăсенђен тувă сăнђăрсем çыхса йараççĕ акмалли малалла кайнă майĕпе сĕтĕрĕнсе пырса вăрлăхсене тăпрапа виттĕр тесе. Уп пек сейалкăпа çăра акма та, сайра акма та пулат̆.



Ленточный посев (тăрăх пăхсан).

Суха тимĕри пеккисене айакалла куçаркалама та пулат̆, йе илсе те пăрахма йурат̆. Кашни суха тимĕри пекки хăй касă туса хăй ĕретне акса пырат̆, çавăнпа вĕсене айăкăн айăкăн куçарнинђен йе çăра акни килет. Акнă ĕретсен хушшисем пĕр пек пулсан, ăна вырăсла

„сплошной рядовой посев“ теççĕ, пĕр пек мар пулсан, акнă ĕретсем хушшинҫе пушă вырăн пулсан, йе сарлака акнă вырăн пулсан „ленточный или полосный посев“ теççĕ. Лайăхрах, паллăрах акă ҫакă ҫертеш çинҫе паллă вăл. Унта касăсене урлă каснă пек кăтартнă.

I. Сплошной частый рядовой посев. Ĕретсем хушши $2^1/_2$ дюйм.

v v v v v v v v v v v v v v v v v v v v v v

II. Сплошной редкий рядовой посев с широкими междурядами

v v v v v v v

III. Ленточный или полосный посев. Акнă вырăн сарлакĕш 10 дюйм. акнă ĕрет 5, пушă вырăн 12 дюйм.

v v v v v 12 дюйм v v v v v

← → 10 дюйм

IV. Ленточный посев. Акассине 3 ĕретлĕ акнă, сарлакĕшĕ 6 вершук, пушă вырăн 8 вершук

v v v v v v

6 верш. 8 верш.

Ҫаксене пăхсан, акă мĕн курăнат. Ĕретсем хушши $2^1/_2$—5 дюйм пулсан (ҫерт. I) унта тырă ӳснĕ вăхăтра нийепле те тырра таптамасăр ĕçлеме çук, ленточный посев пулсан (III пе IV ҫертеш) хушшисенҫе ĕçлеме пулат. Унта мĕн ҫухлĕ ĕçлесси, мĕнле ĕçлесси вăл çу тăрăх йе çĕр тăрăх пулат. Çĕр ытларах пусăрăнсан, кирлĕ мар курăк тухса тулнă пулсан темиçе хутта ĕçлес пулат. Ăна ĕçлемелли, çăмламалли урăх йапаласем пур.

Ҫапла çĕре ĕреҫĕ ĕрҫĕпе акасси, вăл тырă ӳснĕ вăхăтра ĕçлемеллинҫен, çĕре тӳрлетессинҫен лайăх. Мĕншĕн апла ха вăл? Ахаҫ алпа пăрахса акнă ҫухне пирĕн хресҫенсем вăрлăх витĕннипе пăхаççĕ, урăх нимĕн те çук. Çĕр мĕнле-ши, нӳрлĕ-ши, ӳсĕ-ши тырă, ӳсмĕ-ши тесе аса та илмеççĕ.

Тырă ӳснĕ ҫухне, çумăр çуса уйартсан, çĕр кăшт çийелтен хытса ларат, çавăнпа тырă-пулă тымарĕсем, унта сывлăш кĕреймен пирки ӳсме ҫарăнса лараççĕ. Тата ун пек хытса ларнă тăпра ҫас типсе кайат, çумăр çусан та ҫас нӳрленеймест. Йалта пурăннă çын пĕтĕмпех пĕлет ĕнтĕ ăна. Авă хăш хăш çулне уйар пулнăран çĕр тем пек типсе хытса кайат, сухала пуçласан катăкăн катăкăн хăпаланса ырат, хăш ҫухне тата суха пуçне те ватса пăрахат.

Тата ахаҫ алпа пăрахса акмалла йăла вăл çĕре ахаҫ типĕтсе йарат. Сухаланă ҫухне айалти нӳрĕ çийеле тухса йулат те, хĕвелпе ахаҫех ним усăсăрах типсе ларат.

Сейалкӑпа аксан апла пулас ҫук. Унпа аксан вӑрлӑх 1½ дюймран пуҫласа 3 дюйма ҫитеҗҗен тарӑнарах ӳкет, тата ҫӗрӗн нӳрлӗ тӑпри ҫийеле тухса йулмаст. Хушшисенҗе ӗҫлеме йуранӑ майӗпе (обработка междурядий) ҫӗр пусӑрӑнса кайса ҫийелти тӑпри хытса ларас ҫук, тата кирлӗ мар куракксем пулас ҫук, ҫӗрӗн нӳрри те айалта тӑмалла. Ҫапла, ҫак йӗркепе ӗҫлесен, тырӑ пит лайӑх пулмалла.

Анҗах кирек мӗнле пулсан та рядовой сейалкӑпа акса усӑ курас пулсан, лайӑх, шултра, тутӑ вӑрлӑх акас пулаӗ. Наҗар выҫӑ вӑрлӑхсем аксан, вӑрлӑх шӑтса тухман пирки, ахаль усӑсӑр пушӑ вырӑнсем йулаҫҫӗ. Ку йӗркепе аксан, ахаль алпа акса нумай вӑрлӑх усӑсӑр пӗтнӗ пек, вӑрлӑх пӗрҗисем ахаль пӗтес ҫук, меншӗн тесен пур вӑрлӑх та вырӑнлӑ ӳкет, пур те ҫӗре пӗр пек ӳксе пӗр пек шӑтмалла пулаҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ ҫак рядовой сейалкӑпа мӗнле акас тенӗ, ҫапла акма пулаӗ: ҫӑра акас тесен суха тимӗри пеккинесе—ҫӑрарах ларт, сайра акас тесен—сайрарах ларт, хӑна мӗнле кирлӗ, ҫапла ту. Алпа акнӑ җух апла тума хӗн. Тата ҫапла аксан вӑрлӑхӗ те ытла питех нумай кӗмест; алпа акнинҗен пӗр 30% йахӑп сахалтарах кӗреӗ, теҫҫӗ.

Пирӗн Хусан кӗпӗрнинҗе нӳрӗ тытайман ҫӗрсем хӗвел тухӑҫпе кӑнтӑр хушши йенелле җылайтарах. Ҫав ҫӗрсенҗе ҫак ҫпӗ калавӑ пек ӗҫлеме пуҫласан уйар ҫанталӑксем ытла питӗ хӑрушӑнах курӑнас ҫук.

Анҗах пирӗн Хусан кӗпӗрнинҗе рядовой сейалкӑ таврашӗ пит сахал, хресҗенсем хушшинҗе ҫуках та пуль. Самарпа Саратту кӗпӗрнисенҗе вӗсем пит нумай. Унта хӑш хӑш йалсем, хӑш хӑш вуҗӑссем тула ҫав рядовой сейалкӑпа анҗах акса тӑваҫҫӗ.

*А. Казаринов.*

## Ҫарансем ҫинҗи усал куракксем тата вӗсене йепле пӗтерессинҗен.

Пирӗн хушӑри ҫӗр ӗҫлекенсенҗен „улӑхра усал куракксем пур“ тенине ӗненекен ҫукпа пӗрех. Вӗсем „улӑхра ҫитӗнекен пур курӑк та усӑллӑ, ӑна выҗӑх ҫийет“ теҫҫӗ. Ҫапла шухӑшлакансем тӗрӗс шухӑшламаҫҫӗ, меншӗн тесен пирӗн ирсӗрленсе, тискерленсе кайнӑ ҫарансенҗе ҫиме йурӑхлӑ мар куракксем нумай. Ҫав выҗӑх ҫимен хытӑ куракксем ҫинҗен, тата йӗплӗ куракксем ҫинҗен астуса илӗр-ха! Тата кунта ӗнесен сӗтне пӑсакан шӑршлӑ куракксене хушӑр. Тата выҗӑхсене пӑсакан инкеклӗ куракксене аса илӗр-ха! Ҫак усал, выҗӑха йурӑхлӑ мар куракксем патне мӑка та хушас пулаӗ. Мӑк пирӗн ҫарансем ҫинҗе пит-те тулӑх ӳсет. Урӑх кунтах выҗӑха тӑрантарассинҗен ним усӑсӑр куракксене хушар. Ҫавнашкал уссӑр, ниме

йурăхсăр курăксем пирĕн çарансем çинҫе нумай. Çапла ĕнтĕ, йепле епир „пирĕн çарансем çинҫе усăсăр курăксем çук“ тийĕпĕр? Ирсĕр курăксем пирĕн улăхсенҫе нумай. Пирĕн çарансен тискерленнин, ирсĕрленнин инкекĕ нумай. Епир халĕ тин, самапа йывăрланса килсен, çарансепе йусасси çинҫен, кăшт шухăшлама пуçларăмăр. Пирĕн пайан-ыран тенĕ пекех çарансене ирсĕр курăксенҫен тасатма тытăнас пулат. Унсăр пуçпе выҫăх-ҫĕрлĕхе майлатас тенĕ ырă шухăшсем ахалех пăҫăхса ларĕç. Мĕн ҫухлĕ улăх тискерленнĕ, çавăн ҫухлĕ пирĕн ăна тасатма тăрăшас пулат.

Улăхра тискер курăксем нумайах мар пулсан, унти хытă курăксене çумлас пулат. Çав хытă туналлă курăксем малтан сахалăп курăнсан та, кайран питĕ хунаса, нумайланса, ихсе кайаçĕ. Çавнашкал ирсĕр курăксенҫен кунта ут-кăшкар çинҫен пăртак калар. Вăл тымартан та, вăрăран та шăтма пултарат, çавăнпа пит ҫас хупаса кайат; çитменнине ăна ҫас пĕтерме пит-те йывăр. Ут-кăшкарăн ниймепле усси та çук, анҫах инкекĕ нумай. Выҫăха вăл йурăхлă мар—выҫăх ăна çимест, анҫах утă çулнă ҫухне, тата утă типĕтнĕ ҫухне вăл пысăк ҫăрмав тăват, çитменнине улăхри лайăх курăксене çитĕнме памаст. Çавăнпа çав ут-кăшкарне пĕтерме пит тăрăшас пулат. Пĕтерес тесен, ăна, хунаса нумайланса кайитҫен, çумлас пулат. Анҫах çумлани ҫăнах усăллă пултăр тесен, ăна тĕплĕ çумлас пулат—тымарăн татăк-кĕсĕксене çĕре хăварма йурамаст. Çавăнпа çĕр нӳрĕ ҫухне çум çумлани лайăх. Çĕр нӳрĕ ҫухне тымарсене лайăхрах туртса кăларма пулат. Кирлĕ пулсан, çак улăха тасатас ĕçе кĕреçепе, çенкĕпе, çĕçĕпе тата ытти çĕр-ĕç хатĕрĕпе майлаштарма йурат. Ку усал курăксене пĕтерес тесен, темиçе çултан, кашни çул çумласан, пĕтерме май пур. Тата ҫеҫек кăларитҫен çав ирсĕр курăксен тунисене касса татса пăрахсан тип-те лайăх пулĕ-ҫҫĕ, мĕншĕн тесен вĕсен вăррисем пулаймĕҫĕç те, вĕсем шăтса тухса ӳсме пултармĕҫҫĕç.

Çаран çинҫи усал курăксене, мĕншĕн те пулсан çумлама май пулмасан, ҫеҫек сурăлитҫен çулса тăкни питĕ аван пулĕ-ҫҫĕ. Çапла ҫеҫек çурăлитҫен çулсан, пĕр çул анҫах çитĕнекен курăксем пĕтĕмпĕх пĕтеççĕ; тымартан шăтакан (темиçе çул çитĕнекен) курăксем вăйсăрланаççĕ, мĕшĕн тесен вĕсем хăйсем валли тепĕр çулта çитĕнме апатлăх йапаласене хатĕрлесе хума пултараймаççĕ.

Çав уссăр курăксен тунисене кашни çул касса татса пăрахсан усă пысăк пулат. Анҫах çумлассине те çумласан тата тунисене ҫеҫек çурăлитҫен касса татса пăрахсан, усă тата пысăкрах пулĕ-ҫҫĕ.

Хăш ҫухне, усал курăксене пĕтерес тесе, çарансене сӳрелеççĕ. Сӳрелесе лутра, çĕр çумне çыпăçса çитĕнекен курăксене пĕтереççĕ. Кăнашкал курăксем, хăйсене выҫăх тиркесех каймаст пулсан та, усăсăр,—çĕр çумне çыпăçса ларнăскерсене, вĕсене çулнă ҫухне çава илмест, çитменнине ахалех вырăн йышăнса лараççă те, ытти курăксене çитĕнме памаççĕ. Çавăнпа вĕсем çарана пăсаççĕ.

Тата çаранссем çинҫе мăк пулаť, вăл çаранăн тата пысăкрах тăшманĕ. Мăк пит ҫăтăмлă, çавăнпа вăл ытти курăксем çитĕнме пултарайман çĕртре те çитĕнме пултараť. Хăй йерне çĕртрен курăксене, пусмăрласа ÿсме памасăр, айăкалла сирет. Çав мăка пĕтерес тесен, çуркунне, йур кайсан, çĕр пĕр вершук таран ăшăнсан, çарана сÿрелес пулаť. Ун ҫухне тымарсем вăйсăр пирки, мăк сÿреленипе лайăх тăпăлса тухса ÿкет. Улăхра лаша ури йĕрĕ те йулмасť, çавăнпа улăх пăсăмасť.

Улăха сÿрелеме уйри анасем сÿрелемелли йывăртарах тимĕр сÿресем йураççĕ. Вăл сÿресен шăлĕсем шĕп-шĕвĕр пулас пулаť. Кăнашкал сÿресем пуçне тата улăхсене сÿрелемелли сÿресем пур. Çав çарансене сÿрелемелли çÿресемпе сÿрелесен тата авантарах пулаť, мĕншĕн тесен сÿреленĕ ҫухне вĕсем тулмаççĕ, сÿрелемен вырăн та хăвармаççĕ. Çÿрелесе тăпăлтарса кăларса пăрахнă курăксене çаран çине хăварма йурамасť, мĕншĕн тесен вĕсем тымарланса улăха каллех çыпçăнма пултараççĕ. Вĕсене, пĕр çĕре пуçтарса, çунтарса йарас пулаť.

Çак хаљ каланă пек çав усал курăксене пĕтерме тăрăшни сахал, хăш ҫухне çарана аплах йусама май пулмасť. Йÿçĕ вырăнсене илер-ха. Унта кирек хăçан та выљăх ĕретлĕ çимен хăйăх, тата ытти йÿçĕ курăксем ÿсеççĕ. Çав йÿçĕсенҫе çитĕнекен курăксене пĕтерсе, урăх курăксем ÿстерме тăрăшас пулаť. Йÿçĕре хăйахсем нÿрĕ пирки анҫах çитĕнеççĕ, вырăн типĕ пулсан вĕсем çитĕнме пултараймаççĕ. Çавăппа, вĕсене пĕтерес тесен, йÿçлĕх вырăнсене типĕтме тăрăшас пулаť. Йÿçĕсене типĕтесси çинҫен калас пулсан, пит нумай калас пулаť, çавăнпа купта ун çинҫен çырма вырăн çитмест. Камăн хăй улăхне типĕтес шухăш пур, унăн пĕлекен çынсенҫен ыйтса пĕлес пулаť. Купта епир хушăран анҫах калăпăр,—йÿçсе тăракан улăха икĕ канав авăтсан, çав улăх типме пултараť. Вара унта лайăх курăксем ÿсме пултараççĕ. Çав типнĕ вырăпа исвĕспе кĕл сапсан вăл тата ытларăх аванланаť.

Хăш-хăш çаран çинҫе пĕр ĕретлĕ курăк та çитĕнмест, унта ирсĕр курăксем анҫах çитĕнеççĕ. Апашкал çарансене сухаласа пĕтĕмпех çĕпетес пулаť.

Çак ку таранҫен каланă пек çарана йусас тесен, усал курăксене пĕтерме тăрăшас пулаť. Анҫах хăш ҫух çарана йусас йенҫен çын ним тума та пултараймасť, мĕншĕн тесен курăк вăррисем çилпе пĕр çĕртен тепĕр çĕре вĕçсе кайса ÿкеççĕ.

Анҫах хăш ҫухне çынсем хăйсемех айăплă. Нумай çĕрте, улăхра курăк çăрарах çитĕнтерес тесе, курăк сайра çитĕннĕ вырăна курăк вăррисем акаççĕ. Çавнашкал ĕçлекен çынсем шухăшласса аван шухăшлаççĕ, анҫах, кăйсем пĕлмен пирки, усал ĕç тăваççĕ. Мĕншĕн тесен курăк вăррисем хушшинҫе усал курăк вăррисем пит нумай. Вăл курăк вăррисене акасса та сÿрелемен çĕре акаççĕ. Ырă курăк вăррисем аҫашрах та, çавăнпа вĕсем ҫасрах пăҫланса лараççĕ, усал

куран вӑррисем ҫӑтуллӑрах та, ҫавӑнпа вӗсем ырӑ курӑк вӑррисенҫен ҫасрах шӑтса тухма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа вара курӑк вӑррисене акни улӑха йусани пулмасть, вӑл улӑха пӑсни анҫах пулать.

Тислӗк тӑкнӑ ҫухне те астӑвас пулать. Майне пӗлмесен вӑл та ҫарана пӑсма пултарать. Тислӗк ӑшӗнҫе усал курӑк вӑррисем пулма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа выҫӑха тӑрантарнӑ ҫухне те, тислӗк тӑкнӑ ҫухне те асӑрхас пулать. Выҫӑха тӑрантарнӑ ҫухне, тырра усал курӑк вӑррисенҫен тасатас пулать. Хӑш ҫухне усал курӑксен вӑррисене выҫӑха памалах пулсан, весене лайӑхӑн пӗтерес пулать, вара вӗсем тислӗкпе пӗрле ҫӗре лексен те ҫитӗнме пултараймаҫҫӗ. Вылӑх айне сарма та тасарах улӑм кирлӗ, наҫартарах улӑма урӑх ҫӗре йарас пулать (вут хутма). Тислӗк улӑха тӑкас пулсан, ӑна лайӑхрах ҫӗртес пулать. Пиҫнӗ тислӗк ӑшӗнҫе пулнӑ усал курӑк вӑррисем пиҫсе кайаҫҫӗ те, шӑтма пултараймаҫҫӗ.

Халӗ тата утӑ ҫулассине кайа хӑварнин сийенӗ ҫинҫен пӑртак калӑпӑр. Нумай ҫӗрте утӑ Питрав кунҫен ҫулмаҫҫӗ, ҫас ҫасах Питрав кун иртсен тек ҫулаҫҫӗ. Капла „улӑхра утӑ нумайтарах илес“ тесе хӑтланаҫҫӗ. Нумайрах илесси ҫӑпах та нумайрах илеҫҫӗ, анҫах вӑл утӑ вӑхӑтра ҫулнӑ утӑ патне ҫитеймест. Ҫеҫек ҫурӑлнӑ ҫухне, тата ҫеҫек ҫурӑлиҫҫен ҫулнӑ утӑ ҫи аван пулать. Ҫаран ҫуласси кайа йулсан, курӑк вӑррисем пулса ҫитсе тӑкӑнаҫҫӗ. Ҫав тӑкӑннӑ вӑрӑсем хушшинҫе усал курӑк вӑррисем нумай пулаҫҫӗ. вӗсем шӑтса тухса ӳсе ӗрҫесе кайаҫҫӗ те, ҫарана наҫарлатаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫарана вӑрӑ пулса ҫитиҫҫен ҫулма тӑрӑшас пулать.

Ҫак хаҫ каланинҫен хӑш ҫух ҫаран хуҫи хӑй ҫаранне, усал курӑксене нумайлантарса, хӑйех наҫарлантарма пултарни палӑ.

Улӑха йусас йенҫен кунта калани ҫитмест. Ҫаранти усал курӑксене йепле те пулсан пӗтерес тесен, ҫарана ҫӑра, вӑйлӑ, тикӗс тӑвас тесен, хытӑ тӑрӑшас пулать. Ҫавӑнпа ҫарана 1) ҫуркунне икӗ хут ҫӳрелес пулать, 2) ҫӗнетес пулать, 3) курӑк вӑрри акнӑ ҫухне, ӑна лайӑх суйласа, тасатса акас пулать.

## Выҫӑх-ҫӗрлӗх валли ҫепҫе (вика) ӳстересси ҫинҫен.

„Апат нумай пулсан, выҫӑх нумай пулать, выҫӑх нумай пулсан, навус нумай пулать, навус нумай пулсан укҫа та тырӑ та нумай пулать“, тет халӑх ӑслӑхӗ. Пирӗн хресҫенсем ҫак ваттисем каланӑ сӑмах тӑрӑх тумаҫҫӗ. Апат-тавраш вӗсен пит сахал, ҫавӑнпа ҫӗр ӗҫлекен ҫын выҫӑх-ҫӗрлӗхе те нумайӑн тытса тӑраймасть, хӑйӗн ҫӗрӗ валли те навус ытлашши тӑваймасть. Ҫакна кура пирӗн йенҫи хресҫенсен ҫи малтан выҫӑх апатне нумайрах хатӗрлесси ҫинҫен шухӑшлас пулать. Ҫакна астуса тӑмасан, выҫӑха лайӑх апат хатӗрлесси ҫинҫен тӑрӑшмасан, ҫыннӑн ӗҫлени шыва кайнипе пӗрех пулать, мӗншӗн тесен ҫӗр ӑна усӑ пит сахал парать.

Выҫӑх апатне акӑ çапла нумайлантарма пулаҭ: 1) çеремсене аванлатсан, халĕ ахалех выртакан шурлӑх вырӑнсене, тункаталлӑ çĕрсене тата ытти çавӑн пек çĕрсене пĕтерсен; 2) хирсенҫе кирлĕ куракссене ӳстерсен; 3) çарӑк, ҫĕкĕнтĕр, кӑшман тата урӑх çакӑн пек тымарлӑ йапаласене ӳстерме тытӑнсан. Выҫӑх апатне çапла нумайлантарма пулаҭ, анҫах епĕ ун çинҫен каласа парас теместĕн, мĕншĕн тесен вĕсем çинҫен урӑх кĕнекесем çинҫе те нумай çырнӑ; вĕсене вуласа пӑхсан пит усӑллӑ пулĕҫҫĕ.

Ку статйа çинҫе епĕ хресҫенсене çепçе йатлӑ курӑка ӳстерессн çинҫен каласа парӑп.

Кирек мĕнле çер ĕçлесе пурӑнакан çыннӑн та усӑллӑ курӑксене ӳстермелли çинҫен пĕлмелле, мĕншĕн тесен пĕлни нихӑçан та ĕçе пӑсмасҭ, усӑ анҫах кӑтартаҭ. Выҫӑх апатне мĕнле нумайлантармалли çинҫен пĕлсен, вӑл хӑйне мĕн кирлине, мĕн тумаллине ҫасрах пĕлме пултараҭ.

Анҫах çепсене ӳстерни темле усӑллӑ пулсан та, çеремсене тӳрлетессине хирсенҫе курӑк акассине манас пулмасҭ.

## Ç е п ç е.

Пирĕн хресҫенсен хушшинҫе çепçе йатлӑ курӑка нумайĕшĕ пĕлеççĕ. Йулашки çулсенҫе çак курӑк çĕр ĕçлекенсен хушшинҫе пит сарӑлҫĕ, мĕншĕн тесен вӑл пит лайӑх апат тата утӑ нумай параҭ.

Çепçе, пӑрçа пек, кашни çул акмалли çур-тырри. Ҫеҫекĕсем унӑн хĕрлĕ-кӑвак, хутаççисем хура хĕрлĕрех, вӑррисем кӑшт тӑрхалларах, çаврака, кантӑр вӑрри тĕслĕрех. Ку курӑка пурте пĕлеççĕ те курнӑ та пулмалла.

Çепçе, тĕрлĕ тӑпра çинҫе те ӳсме пултараҭ. Хирсенҫе те, сухаланӑ çеремсенҫе те, типнĕ шурлӑхсенҫе те, вашмӑк вырӑнсенҫе,—пур çĕрте те вӑл питĕ лайӑх ӳсет, ытармалла мар утӑ параҭ.

Çепçе пит типсе кайнӑ çĕрсенҫе, ытла хӑйӑрлӑ вырӑнсенҫе, ытла йĕпе тӑракан шурлӑхсенҫе анҫах ӳсме пултараймасҭ, çавӑнпа çакӑн пек çĕрсенҫе ӑна акмалла та мар, пурĕ пĕрех унта лайӑх курӑк пулаймасҭ.

Пуринҫен те лайӑх вӑл кӑшт тӑмлӑрах вырӑнсенҫе тата навуслӑ хура тӑпра çинҫе ӳсет.

Çанталӑк таврашĕнҫен çепçе хӑрамасҭ. Çуркуннехи шӑнсене, виç-тӑват кӑратлӑ сивĕсене çепçе пит лайӑх ҫатаҭ; пĕр ик-виç кӑрат ӑшӑ пулсан, çепçе вӑррисем шӑтма та пуçлаççĕ.

Çепçе сивĕрен хӑраманнине пĕлсе, епир ӑна ир акма та пултаратпӑр (сĕлĕпе пĕр вӑхӑтра); ҫас-ҫасах ӑна ӑрасна акмаççĕ, сĕлĕпе хутӑштарса акаççĕ.

Çепçе пит ҫас пулса пыраҭ: аксан пĕр 2 уйӑхран вӑл пулса та çитет, пĕр теçеттинрен 1000—1500 пӑта йахӑн лайӑх, сĕтеклĕ выҫӑха тутлӑхлӑ курӑк параҭ, типĕтсен 200—300 пӑта йахӑн лайӑх утӑ пулаҭ.

Лайăх тăпрапа, сухаланă çеремсем çинҫе çепçе кунтан та нумайрах пулаҭ. Йарăслав, Псков, Кострома кĕпĕрнисенҫе, тата ыттисенҫе те сухалачă çеремсем çинҫен ҫас ҫасах пĕр теçеттинрен 400 пăт утă пуçтараççĕ.

Мĕнле çĕрте мĕн ҫул утă пулнине лайăх кăтартмашкăн, Кострома кĕпĕрнинҫе туса сăнаса пăхнисене пĕрле пуçтарса тупă таплитсăна кунта кӳртетпĕр.

| Çепçене ăçта акнă. | Тăрра. | Çĕре аванлатнă-и тата теçет çине мĕн ҫул тăкнă. | Пĕр теçеттин çинҫе мĕн ҫул çепçе пулнă. |
|---|---|---|---|
| Çемçетнĕ çаран çинҫе. | Хăйăрлă тăм. | Аванлатман. | 390 пăт. |
| Тĕмескеллĕ çарана сухаласа аксан . . | Навуслă хура тапра. | „ | 440 „ |
| Парлак выртакан çарана сухаласан . . | Хăйăрлă тăм. | „ | 499 „ |
| 4 çул хушши сĕлĕ акнă çаран çинҫе . . | Кĕлленсе кайнă хăйăрлă тăм. | 24 пăт томасшлак, 30 пăт каинит. | 480 „ |
| Йĕтĕн акнă çаран çинҫе . . . . | Хăйăрлă тăм. | 18 п. томасшлак, 6 п. калиллă тăвар. | 400 „ |
| Çур –тырри пуссинҫе. | Кăшт хăйăрлă тăм. | Аванлатман | 287 „ |
| Ыраш хыççăнхи çуртырри пуссинҫе . . | Нӳр хăйăрлă тăм. | Аванлатман | 274 „ |
| Çĕртме пуссинҫе . | Хăйăрлă тăм. | Навус тăкнă | 220 „ |
| Сухаланă типĕ çаран çинҫе . . . . | Кĕлленнĕ хăйăрлă тăм. | Аванлатман | 260 „ |

Ку таплитсăран епир акă мĕн куратпăр: 1) хирсене аксан çепçене 1 теçеттинрен 220-250 пăт илме пулаҭ, 2) сухаланă çеремсем çине аксан 240-400 пăта йахăн. Çепçене акни питĕ усăлли курăнсах кайаҭ.

Çепçен çулçисем пăрçа çулçи пек сарлака, çавăппа çепçе тĕрлĕ кирлĕ мар курăксене хупăрласа ӳсме памасҭ, вара çепçе хыççăн анасем те тасалаççĕ; таса ана çинҫе тырă лăйăх пулнипе кирек кам та пĕлет.

Ҫепҫе тата йурами ҫӗрсене тӳрлетнӗ ҫух пысӑк усӑ кӑтартма пултарать. Ҫи малтан вӑл, халӗ каланӑ пек, ҫӑмлӑ куракксене пӗтерет, тымаррисем вӑрӑммипе вӑл темле йурами ҫӗре те ҫемҫетсе тӳрлетет, хӑй те ҫакӑн пек ҫӗрте питӗ лайӑх пулать.

Ҫепҫе тата ҫӗре тырӑ-пулла ӳсме пит кирлӗ сывлӑш парать. Ӑна вырӑсла „асот" теҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫепҫе хыҫҫӑн пӗр-пӗр тырӑ аксан, ҫав тырра валли таса, ҫӑмлӑ куракксӑр асотпа хутӑшнӑ ҫӗр пулса тӑрать, тырӑ та вара пит лайӑх пулать.

Халӗ, епӗ каласа панӑ сӑмахсенҫен, ҫепҫе акӑ ҫапла усӑ кани курӑнать:

1) Ҫепҫе питӗ лайӑх пулакан курӑк: выҫӑх валҫи вӑл ытармалла мар апат.

2) Ҫепҫе ҫӗре кирлӗ мар (ҫӑмлӑ) куракксенҫен тасатать, тымаррисемпе ҫӗре ҫемҫетет, ҫӗре тырӑсене кирлӗ „асот" йатлӑ сывлӑш парать.

3) Ҫепҫе пит ҫас пулать. Ҫавӑнпа ӑна ҫӗртме пуссине те акма пулать, мӗншӗн тесен, ҫӗртме аки тума пуҫличен ҫепсене ҫулса илме пулать.

4) Ҫепҫе пийепле ҫанталӑк улшӑннинҫен те хӑрамасть; тӗрлӗ тӑпрана та вӑл пит тиркесе каймасть (типсе кайнӑ хӑйӑрлӑхсемпе ытлашши шурлӑх вырӑнсене шутламасан).

5) Ҫепҫене, курӑк шӑтман тункаталлӑ ҫеремсене сухаласа аксан вал унта пит лайӑх пулать.

## Ҫепҫене акасси ҫинҫен.

Ҫепсене виҫӗ тӗрлӗ акаҫҫӗ:

1) ҫӗртме пуссине—курӑк йе утӑ тума,

2) ҫурхи тырӑ пуссине апат валли йе вӑррисене пуҫтарма.

3) сухаланӑ ҫерем ҫине.

Ҫӗртме пуссине аксан, ҫын икӗ тӗрлӗ усӑ курать: ҫепҫене те ҫулса илет, ыраш акма та ҫӗр хатӗресе ӗлкӗрет.

Ҫӗртме пуссине акас тесен ӑна пит ир акас пулать, мӗн пур ҫур-тыррине малтан. Ир акнинҫен хӑрас пулмасть, мӗншӗн тесен, пасӑр калани тӑрӑх, ҫурхи шӑпсенҫен вӑл хӑрамасть. Псковпа Питӗр кӗпӗрнисенҫе сивӗ пулсан та ӑна ака уйахӗп 20-25-мӗш кунӗсенҫе акаҫҫӗ. Ҫепҫене акма васкамалла, мӗншӗн тесен, ӑна ҫулса илсен, ҫӗре ыраш акма хатӗрлес пулать. Ҫепсене ҫулса илнипе ыраш акни хушшинҫе 3 ернене йахӑн, ҫӗре хатӗрлесе хума, вӑхӑт хӑвармалла. Ӑна акӑ ҫапла шутламалла. Пасӑр калани тӑрӑх ҫепҫе 2 уйӑхра пулса пырать. Ыраша ҫурла уйӑхӗн пуҫламӑшӗнҫе акмалла пулсан, ҫепҫене ҫу уйӑхӗн пуҫламӑшӗнҫе акмалла. Вара хуҫап ҫӗре ыраш валли хатӗрлеме 1 уйаха йахӑн вӑхӑт йулӑть.

Ҫакна шутласа илме пултараймасан, ҫепҫене акас та пулмасть, мӗншӗн тесен лайӑх шутласа илмесен, ыраш акма ӗлкӗреймесӗрех йулма пулать.

Çенçе акас тепӗ анасене кӗркунне, сивве кӗрес умӗн, тарӑн сухаласа хӑварас пулать. сӳреме йурамасть. Хӗлле çуна çулӗ ларсан ана çине навус тӑкса пысӑк купасем туса хурас пулать. Çуркунне иртерех çак навуса пур ана çине пӗр пек салатас пулать те, салатсанах тарӑнрах сухаламалла. Кун хыççӑн çенçе вӑррисене йе алпа, йе акмалли машшинӑпа хӑйне ӑрасна, йе сӗлӗпе хутӑш акас пулать, унтан пуçне йе сӳрепе вӗсене тӑпраща хутӑштарас пулать.

Хӗлле навуса ана çине тӑкаймасан, ӑна çуркунне иртерех тӑкас пулать. Вара ӑна халӗ каланӑ пекех салатса сухаласа çенçе акмалла.

Навус кӗркуннех пумай пулсассӑн акӑ çапла тумалла: кӗркуннех ӑна ана çинҫе салатса, сухаласа хумалла. Çуркунне вара тӳрех сӗлӗпе хутӑштарнӑ çенçене акмалла. Акас умӗн анана сӳресен тата лайӑхрах пулать. Çӗртме ани çине акнӑ ҫух, навуспа пӗрле уп пекех курӑка ҫӗртсе ӳстерекен йапаласем хутӑштарсан аван пулать. Пӗр теçеттине 12-15 пӑта йахӑн „томасшлак“ тата 6 пӑта йахӑн „калийная соль“ тийекен йапалана, томасшлак вырӑнне суперфосфат илме йурать, пӗр теçеттине 12 пӑт кирлӗ. Çак йапаласене çенçене акиҫҫен $1^{1}/_{2}$-2 ерне малтан салатмалла, салатсанах сӳресе хумалла.

Вӗсене пурне те кирек мӗнле „сельско-хозяйственный“ склатсенҫе илме пулать. Елӗкхи шутпа каласан, вӗсен хакӗ акӑ çапла: суперфосфат 75-80 пус, калийная соль (30%)—80-90 пус, томасшлак —45-50 пус.

Çак йапаласене навуспа пӗрле хушни хаклӑрах пек те туйӑнӗ, анҫах çак тӑкак çенçене çулса илсен те çенçе хыççӑн урӑх тырӑ аксан та ытлашшипех тавӑрӑнӗ.

Çенçерен ҫӗрӗ апат тӑвас тесен те утӑ типӗтес тесен те, ӑна çур-тыррипе хутӑштарса акаççӗ, сӗлӗпе аксан пуринҫен те лайӑх пулать. Çапла аксан вара çенçе çӗр çине те ӳкмест, утӑ тума та лайӑх типет.

Çенçене сӗлӗпе пӗрле аксан пӗр теçеттине 6 йе 9 пӑт çенçе вӑрри çине 4 йе 6 пӑт сӗлӗпе хутӑштармалла.

Çенçене пасӑр калапӑ тӑрӑх ыраш акиҫҫен 3-4 ерне малалла çулса илмелле. Вӑхӑтлӑ акнӑ пулсан ӑна ҫеҫекленсе кайсан çулмалла пулать, ку вӑхӑтра сӗлӗ те пуç кӑларать. Çак вӑхӑтра ӑна çулса илсен пит лайӑх пулать.

Ку вӑхӑта çитиҫҫен çенçе ӳссе çитеймесен те ӑна çулас пулать. çулмасан ыраш акмалли вӑхӑт иртсе кайма пултарать. Ыраша çухатиҫҫен çенçене пӑртак сахалтарах пуçтарса илсен лайӑхрах пулӗ.

Çенçе хыççӑн çӗртмӗ анине ҫасрах сухалас пулать, ыраш акаҫҫен çӗрӗн кӑшт пусӑрӑнмалла пултӑр, тесе. Çавӑнпа хӑш-хӑш çынсем çенçене çулса илсен, ӑна тӳрех урӑх çӗре типӗтме илсе кайаççӗ, йе ӑна йури тунӑ вырӑнсем çине çакса типӗтеççӗ.

Çенçерен ҫӗрӗ апат тӑвас тесен, ӑна йӑлт пулса çитиҫҫен тӑмасан та йурать.

Каласа панӑ сӑмах тӑрӑх çепçе акас тийекен çыннӑн ӑна çапла тӑвас пулатӑ:

1) акма çуркунне иртерех тытӑнас пулатӑ,

2) вӑхӑтлӑ (ыраш акаҫҫен виç-тӑват ерне малалла) çулса илес пулатӑ; çулса илсенех çӗре ырӑпш валли хатӗрлес пулатӑ.

**Çепçене çур-тырри хирӗнҫе тата çеремсенҫе акни.** Çепçене çур-тырри хирӗнҫе, йе сухаласа хунӑ йурами çеремсем çине акас тесен акӑ çапла тумалла. Акас тенӗ вырӑнсене кӗркуннех сивве кӗрес умӗн сухаласа сӳремесӗрех хӑвармалла.

Çуркунне вӗсене тимӗр сӳрепе сӳресе сӗлӗпе хутӑштарнӑ çепçене акмалла.

Çеремсене сухаласан унта муклашкасем питӗ пысӑк пулаççӗ, çавӑнпа вӗсене çуркунне малтан ватса тухас пулатӑ, кайран вара тимӗр сӳрепе сӳрес пулатӑ.

Акас тенӗ çеремсемпе анасене кӗркунне сухалама ӗлкӗреймесен, тата муклашкасене ватмалли йапаласем пулмасан, вӗсене çуркунне иртерех сухаласа сӳрепе лайӑхрах вӗтетме тӑрӑшас пулатӑ, вара унта акма та йурасах пыратӑ.

Йурами çеремсем çине навуссӑр та, пасӑр каланӑ суперфосфатпа томасшлаксемсӗр те çепçе питӗ лайӑх пулатӑ. Çепçе хӑй урӑх, кирлӗ курӑксем валли, çӗре хатӗрлесе, тӳрлетсе тӑратӑ, теçеттинрен 200-400 пӑта йахӑн лайӑх курӑк паратӑ.

Çерем, курӑк ӳсмелле мар пӑсӑлса кайсан, 1 теçеттине 12-15 пӑт томасшлак тата 5-6 пӑт „калийная соль“ тенине хутӑштармалла.

Çеçпене навуссӑр ыраш анисем çине аксан, çак йапаласене хутӑштарни пит усӑллӑ пулатӑ. Вӗсене çуркунне çепçе акаҫҫен пӗрикӗ ерне малтан салатса çӗрпе сӳресе хутӑштарас пулатӑ.

Çепçене çур-тырри хирӗнҫе те сухаланӑ çеремсенҫе те акас тесен 1 теçеттине 6-9 пӑт çепçе çине 4-6 пӑт сӗлӗ хушмалла. Çӗр лайӑхрах пулсан çепçине те сӗллине те сахалтарах акас пулатӑ, çӗр наҫартарӑх пулсан вӗсене нумайрах акас пулатӑ.

Кунта та çӗртме ани çинҫи пекех çепçене иртерех акас пулатӑ, ниçта та васкамалла пулмасан та. Кӑшт кайа йулсан та çепçе лайӑх пулатӑ-те, иртерех аксан тата та лайӑхрах пулӗ.

Хӑш-хӑш çынсем акас тенӗ вырӑнсене малтан пайлаççӗ; кашни пайне вара вӗсем ерне иртсен акса пыраççӗ: пайӑн пӗр пайне аксан, тепӗрне 1 ернерен, виççӗмӗшне 2 ернерен акаççӗ. Çапла тусан çепçе, кашни пайра пӗрин хыççӑн тепӗри ӳссе пыратӑ.
Çапла туни выҫӑха лайӑх пулатӑ, вӑл пӗр майӗ ҫӗрӗ курӑк çисе пурӑнатӑ.

## Çепçене вӑрришӗн акни.

Çепçе вӑрри тӑвас тесен, ӑна çур-тырри хирӗнҫе те çеремсем çинҫе те акма та йуратӑ. Çӗртме çинҫе ӑна нихӑçан та акас пулмастӑ, мӗншӗн тесен апла ыраш акма ӗлкӗрмелле мар. Сухалас, навуслан-

тарас ĕç утă ваҫҫи тупăпа пĕрех. Акас тесен 1 теçеттине 5-7 пăт çепçе çипе 4-5 пăт сĕлĕ кирлĕ. Акма алпа та йурат̆, машшинăпа аксан тата авантарах пулат̆. Утă тунă ҫухнехи пекех акнă вăррисене сухапа, йе сӳрепе çĕре хутăштармалла.

Çепçен вăррисем сĕлĕпе пĕр вăхатра пулаççĕ, весем пулсанах çепçене çулма тытăнмалла. Ку вăхăтра çепçен айалти хутаççисем йăлтах пулса кайаççĕ, курăкĕ те сарăрах пулат̆.

Çепçене çавапа та çулаççĕ, çурлапа та выраççĕ; типĕтме ĕреҫĕ-ĕреҫĕпе купаласа хураççĕ. Вăррисемшĕн акнă пулсан типпĕ ҫух пит хускатма йурамаст̆, мĕншĕн тесен вăррисем тăкăнма пултараççĕ.

Çепçене типĕтсен çап уççипе çапсан та йурат̆, машшинăпа çапсан тата та авантарах пулат̆. Çепçене çапса илнĕ вăррисене выҫăха апат ваҫҫи хăварас тесен ăна сĕлĕрен уйăрмасан та йурат̆. Уйăрса илес тесен „змейка“ йатлă машшинă кирлĕ, змейкăна ахаҫ сăвăраканран тума пулат̆.

Хăш-хăш çынсем акă çапла тăваççĕ: сарлакарах хăмасене çапса пĕрлештереççĕ те хутшăннă вăррисене йухтараççĕ. Çепçен вăррисемхăйсен çавракипе айаларах кусса анаççĕ, сĕллип вăррисем çӳлерех йулаççĕ.

Пĕр теçеттинрен мĕн пурĕ 60-100 пăта йахăн вăрă тухат̆, уламĕ 120-200 пăта çитиҫҫен пуçтарăнат̆.

Çеçпе вăррипе выҫăха вата-вата параççĕ; уламĕ те унăн пит лайăх апат, сĕлĕ уламĕнҫен ҫилай авантарах.

Çеçпе вăррине ĕлĕкхи хакпа пăтне 1 т. 25 пусран пуçласа 1 т. 50 пуса çитиҫен сутатҫĕç.

Вĕсене кирек хăш „сельско-хозяйственный“ склатра тупма пулат̆.

# Сат туна ҫухне пит кирле правеласем.

*Н. Рыжов.*

Ак епĕ темиçе çул Хусан кĕпĕрнинҫе сат ĕçне туса пурăнатăп. Çак вăхăтра йаланах манăн çынсем сат тунă ҫухне пит тирпейсĕр хăтланнипе куркаламалла пулҫĕ. Вĕсем мĕнле сурт тата йывăç лайăххи çинҫен пĕртте шухăшламаççĕ, анҫах ку пит кирлĕ ĕç, мĕншĕн тесен ку ĕçе тĕрĕс туни малашне пулас тăкака хăтарма тултарат̆ тата йывăç лартакан та кайран кăмăлсăр пулмĕ. Сата 1—2 çуллăха анҫах лартмастăн вĕт, çав вăхăт иртсен ăна кăларса лартма çук. Çук! Сат пĕрре лартсан 30—40 çуллăх пулат̆, ăна малашне улăштарма тата тӳрлетме йе май пулмĕ йе нумай тăкак кăларса сат аталанассипе 5—6 çуллăха ҫарса тăратĕ. Сат тăвакансем, лайăхрах шухăшласа пăхмасăр, темиçе тĕслĕ йе паҫар улма-йывăççисем, крушшăсем, хура çырласем лартса тултараççĕ.

Сат пит лартас килнĕ ҫухне мĕнле йывăçсем ал айне кĕреççĕ, çавсене лартаççĕ. Паллă, кайран çакăн пек пахҫаçĕ сатне тепĕр хут

пăсса туса асапланса пĕтет, пурне те йатлаŤ, ҫас ҫасах—хăй тума тытăннă ӗҫ ҫине аллине сулаŤ.

Ҫак ăнман ӗҫре унран пуҫне никам та айăплă мар: сат тунă ҫухне пӗтӗмпех тӗплӗ шухăшласа ӗҫе лайăхрах тумаллаҫҫӗ, пӗлмен ҫӗрте—пӗлекен ҫынсенҫен, агрономсенҫен т. ыт. канаш ыйтмалла:

Ҫапла ӗнтӗ, пуринҫен малтан ҫакна шут тумалла: пирӗн вырăнта мӗнле суртсем усăллă ӳсме пултараҫҫӗ тата сат вырăнҫи ҫӗр мӗнле суртсене тӗле килет? Хусан кӗпӗрнинҫе улма йывăҫҫи, ҫей ҫырли йывăҫҫи (ҫийе), хурлăхан, хăмла ҫырли тата ҫӗр ҫырли анҫах усăллă ӳсме пултараŤ, крушшăна аванран анҫах лартма йураŤ, вăл усă памасŤ, мӗншӗн тесен шăнаŤ.

Ҫӳлте кăтартнă ăратсене ҫакă кирлӗ:

**Улма йывăҫҫи**—лайăх ҫӗр, тăмлă хура тăпра, вăхăтлă пӳрӗ кирлӗ. Сивве ҫăтаŤ, анҫах сивӗ ҫилсене ҫăтаймасŤ. Йӗпене ыттисенҫен лайăхрах ҫăтаŤ, анҫах ҫӗр айӗнҫи шыв 2—3 аршăнтан ҫийелте пулмалла мар.

**Ҫей ҫырли йывăҫҫи**—ӗнес мар. Кирек мӗнле ҫӗр ҫинҫе те аван ҫитӗнет, анҫах хăйăрлăрах тата хайăрпа тăм хутăшлă ҫӗре лайăхрах йуратаŤ. Ҫуллă, исвӗслӗ ҫӗр ҫинҫе те аван ӳсет. Нӳрӗ ытлах кирлӗ мар, анҫах йӗпене йуратмасŤ. Ҫӗр айӗнҫи шыв 1—1$^{1}/_{2}$ аршăнтан ҫӳлте пулмалла мар.

**Хурлăхан**—хӗрли те, хури те тăмлă—хăйăрлă хура ҫӗр ҫинҫе анҫах лайăх ӳсет, хӗрли—ҫӳлӗ, типӗ, уҫă вырăна йуратаŤ, хури—лутра, йӗпе сулхăм вырăна. Хура хурлăхан пит йӗпе, сулхăм вырăнта та аван ӳсет.

**Хăмла ҫырли йывăҫҫи**—вăйлă ҫӗнетнӗ хура ҫӗре йуратаŤ. Нӳрӗ вăтам, кăшт сулхăм, ҫил тивмен вырăн кирлӗ. Сивве ҫăтаймасŤ, ҫавăнпа хӗлле йур айне пытармашкăн авса ҫыхас пулаŤ.

**Ҫӗр ҫырлине**—аван ҫемҫетнӗ хура ҫӗр кирлӗ, анҫах ытла йӗпе вырăна йуратмасŤ. Уҫă тата пăртак сулхăмлă, анҫах ытла сулхăм мар вырăн кирлӗ, мӗншӗн тесен ытла сулхăм пулсан, упта-йапала ӳсми пулаŤ.

**Крушшă**—уҫă, хӗвел ăшши аван ӳкекен вырăн йуратаŤ, хăйăрлă хура ҫӗр кирлӗ, тымарсем тарăн кайнăран хура тăпра хулăм пулмалла. Йӗпе, сивӗ вырăна, тăмлă тăпрана крушшă ҫăтаймасŤ. Сивве пит сисӗмлӗ. Ҫӗр айӗнҫи шыв 4—5 аршăнтан ҫӳлте пулмалла мар.

Ҫакăнта кăтартнă тăрăх мӗнле ăрат кирлине шут туса илсен, пирӗн вырăна тӗле килекен суртсене суйласа илес пулаŤ. Суртсене суйласа илнӗ ҫухне ҫакна астумалла: усăллă сатра пит нумай сурт кирлӗ мар. Ку ак мӗншӗн пит кирлӗ: а) вырăна тӗле килекен аван суртсем пулсан анҫах, сат усăллă пулаŤ; в) кашни вырăна йуракан усăллă суртсем сахал, ытти вырăнти суртсене лартни усăллă мар—вӗсем никăҫан та аван пулмаҫҫӗ; с) сатра 3—5 сурт пулсан, вӗсен кашнин йăлине вӗренсе ҫитме пулаŤ, кайран ҫав сăнанса

пĕлсе çитнипе вĕсене кашни çул çимĕç пултарттарма йурать; д) пĕр вăхăтра пиçсе çитекен суртсене анђах тупăшлă сутма пулать, е) нумай суртлă сата вăрăсенђен сыхлама нумай тăкак тухать.

Пирĕн вырăнта туса пăхнисенђен тата нумай лартма йуракансенђен, çаксене кăтартма йурать:

## Хĕллехисем.

**Антоновка**—ку кунти улма йывăççисен патши. Пит нумай пулать (10—15 пăт кашниç йывăçран). Йуçĕтме, типĕтме тата хĕлле усрама аван. Ĕнес йывăç мар, сивве ђăтать, нумай пурăнать. Улмисем шултăра, çутă симĕç, йăлтăртатакан хупăллă. Тути тутлăрах уçă, ерех шăршиллă.

**Бабушкино**—Антоновкăран ытларах пăсăлмасăр выртать. Улми антоновкăнђен кайрантарах пулма пуçлать, сахалтарах пулать. Кил валли пит аван сурт. Тутлă.

**Симĕс тата хĕрлĕ анис**—пит нумай пулакан сурт. Улми тутлă, илемлĕ, ăраснах хĕрли, пырпшĕ вăтам. Йуçĕтме пит аван сурт. Сивве ђăтакан йывăç. Çулĕрех, типĕрех вырăнсене йуратать.

## Кĕркуннехисем.

**Штрейфлин.** Çĕрпури питомникра кăна хунаттарма пуçлани вунă çул ĕнтĕ; пирĕн вырăна пит тĕле килђĕ. Çак сурта хресђенсем пит мухтаççĕ; ку тĕсĕнђен те тутинђен те пит аван сурт. Пит пысăккă, симĕсрех сарă, йăрăмлă хупăллă; сĕтеклĕ, кĕрпеклĕ пит тутлă вараллă; çимĕç нумай паракан, сивĕпе çиле ђăтăмлă, çулĕ йывăç.

**Боровинка**—ђи нумай пулакан сурт. Улми тутлă, вăтам, усрама ытлах мар. Хăш ђухне йывăç çинђех çăпăхланса кайат. Çирĕп, ĕнес мар йывăç.

**Титовка**—илемлĕ, ытла тутлах мар улма. Улми ытла нумай пулмаст. Патрак йывăç.

## Çуллахисем.

**Алебастровое**—пит тутлă сурт. Улма нумай пулать, ђас пулса çитет. Ђăтăмлă, çирĕп йывăç, çулĕрех вырăнта авантарах çитĕнет.

**Грушка Московская**—ытла пысăккă мар, анђах йăрăмлă йăрăмлă тутлă улма, пит илеççĕ, мĕншĕн тесен пуринђен иртерех пиçет.

**Астраханское белое**—пур йенђен те аван сурт, хаклă улма. Хӳтĕ вырăна лартас пулать, мĕншен тесен сивве тӳсеймест.

## Ђей çырли йывăççисем.

**Владимирская**—пирĕн патра та ђап саралнă сурт. Пит нумай пулать. Тути аван.

**Любская**—пит нумай пулакан, усăллă сурт. Ытла ир ҫурăлмаст, ҫавăнпа тăнсенҫен аптрамаст. Пит хакла кайат, анҫах пирӗн патра ку йывăҫа сăнаса пăхман.

**Шпанка**—нумай пулат, ир пиҫет, тутлă.

## Кăрушшăсем.

**Бессемянка**—пирӗн вырăнта та пулакан сурт. Тутлă, анҫах нумай усрама ҫук.

## Ҫырла йывăҫҫисем.

Пирӗн патра сăнаса пăхнă ҫырла йывăҫҫисенҫен: хăмла ҫырли—Усанкă, Мальборо, Кутбержо тата Фостальф; ҫӗр ҫырли—Шарплес, Нобель Лакстонь, Виктория; хурлăхан: хӗрлисенҫен—Чудо, Версальская; шуррисенҫен—Версальская белая; хурисенҫен—Русская курпноплодная, Леа плодородная, Неаполитанская.

Ҫав малта ҫырнă суртсене пирӗн вырăнта сăнаса пăхнă пул сан та, анҫах калатăп: Хусан кӗпӗрнишӗн мӗнле суртсем аванни ҫинҫен пиăҫта та халиҫҫен ҫўтсе йавса пăхман.

Малта каланă списăкран вырăна килекен сурта суйласа илсен, вара йывăҫҫисене илме йурат. Анҫах илнӗ ҫухне сат вырăнне кура илес пулат. Вăйлине йс ҫемҫине, вăл тўрленессине ӗмӗтленсе лартни, пӗрех мар. Наҫаррипҫен аван пулаймаст. Илнӗ ҫухне ҫакна асăрхамалла: илекен йывăҫсем, аван туратланнă 5—6 туратлă тăрăллă, ҫурăксемсӗр, сивӗ тивнӗ вырăнсемсӗр тата ытти путăк-шăтăксемсӗр вăлăллă, лӗпсӗрке тымарлă пулмалла. Сыпнă туратăн тӗп вăлли лайăх сыпсăннине пăхас пулат. 2—3 ҫулхи йывăҫсене илес пулат. Пӗр ҫулхи улма-йывăҫҫисене илсен, туратлантарнă ҫухне асапланса пӗтетӗп, 3 ҫултан ытлараххисем—тымар ҫас йараймаҫҫӗ. Лайăх питомниксенҫен, улталаман ҫӗртен, сăмахран: хысна, управă питомникӗсенҫен илес пулат. Илнӗ ҫухне тăвас сата ҫывăхрах питомникран илмелле, мӗншӗн тесен апла пулмасан типӗпе аптрама пултараҫҫӗ. Йывăҫ илекен питомникра ҫӗр тăвас сатринҫен наҫартарах пулсан аван: йывăҫсем ҫасах йăл илӗҫҫӗ. Йывăҫ сурҫӗ лайăх пулсан анҫах, ăна илес пулат.

Йулашкинҫен пӗр икӗ сăмах мӗнле хурăмлă йывăҫ пирӗн вырăна йурани ҫинҫен калас пулат. Ҫапла хурăмлă йывăҫсем пулаҫҫӗ: 1) вăрăм штамплă (штамп тесе йывăҫăн тымарсемпе туратсем хушшинҫи пайа калаҫҫӗ) вӗсен вăлли 2—3 аршăна ҫитеҫен пулат; ҫур штамплă—вӗсен ҫўлӗшӗ 3 шытран 1 аршăн ҫурра ҫитиҫҫен; лутра вăлăллисем—икӗ шытран виҫӗ шыта ҫитиҫҫен тата тӗмлисем—вӗсен вăлă пӗр те ҫук, тураҫӗсем ҫӗртенех пуҫланаҫҫӗ. Пирӗн вырăнта лутра вăлăллисем кирлӗ тата ак мӗншӗн: а) вӗсен хуппи пиҫсе йс шăпса каймаст; б) йур ăшӗнҫе ларнă пирки пирӗн патри шартлама сивӗсене аван ҫăтаҫҫӗ; в) иртерех улма пулма пуҫлат та-

та г) йываçа сийенлетекен хуртсене пӗтерме аван, улмисене татма çăмăл т. ыт. Кăсен кăлтăкӗсем пур, сăмахран: кӗрт тултарсан турӗтсем хуçăлаççӗ, анђах туратсем ан хуçăлђђăр тесе пахђаçӗн асăрхаса тăмалла.

## Пӗрлешсе хурт-хăмăр усрасси çинђен.

*А. Хабачев.*

Халăх виçӗ çул ытла сахăрсăр нуша курат. Йулашки çулсенђе апат-çимӗç нађар пирки çынсем ђей ӗçме тапратнăран сахăр çукки халђи вăхăтра тата ытларах туйтарат. Хăш-хăш çӗрте сахăр вырăнне типӗтнӗ пал-улмисемпе, тата çавăн пек ыттисемпе ђей ӗçме пуçларӗç, нумайӗшӗ ыраш çакăрӗнђен тунă çухарисемпе ӗçеççӗ; сайрисем анђах--хурт-хăмăр усракансем пылпа ӗçсе çак нушана туймаççӗ. Ытти çынсем хаклă хакпа та пулин хурт хуçисенђен пыл илме тăрăшаççӗ, анђах çакăн пирки вӗсем пӗр пӗринђен тата ытларах уйăралаççӗ. Пыл сутакан, вăхăтлă пурăнăçпа пурăнат пулсан та, „пуршуй" пулса тăрат, илекен—„пролетари", „ђухăн" пулса тăрат. „Пуршуй" йаđӗ ыррине нимех те памаст, çавăнпа хурт хуçисем пурне те сутмаççӗ, шанђăклăраххисене анђах параççӗ йе паđах сутмаççӗ, хăрамалла мар вырăнсене пытарса хураççӗ.

Сахăр çукки халăха пыл тума, кирлӗ таран хăйсене валли ăна хатӗрлеттерес пек туйăнат: Куншăн ытла нумайах та кирлӗ мар.

Пӗр çемйе валли çулталăклăх сахăр хатӗрлесе хурас пулсан пӗр пăт пыл анђах кирлӗ. Кун ђухлӗ пыл илмешкӗн пӗлсе тусан, тӗл килсен, пӗр вӗлле хурт анђах кирлӗ.

Пӗр çемйе хурт, пӗр çемйе халăх тутă! Кунтан тӗлӗнме те çук ӗнтӗ! Ӗçе çапла шутласа илсен, кама та пулин парăма кӗмӗн, хăвăн кӳршӳсем-хурт хуçисем çине çилленсе (куç айӗн пăхса) тăмăн. Тӗрӗс, ку шухăша çакăн пекех тусан, хуртсене пăхса тăкак тавăрăнмаст. Çавăнпа уйрăм вӗллесене пӗр вырăна йе темиçе вырăна пухса кашни йалта пӗрлешсе хурт-хăмăр-ӗçлеме пуçлас пулат. Çав ушкăна--кооператива йалти çынсем пур те йермелле. Çак ӗçе пуçласа йамашкăн укçа тенкӗ тӗлӗшӗнђен пикамшăн та ђарăнса тăру пулмӗ. Çакăн пек кооперативлă, ӗрттеллӗ пурăнăçсене туни халăхшăн пит кирлӗ тата усăллă шкул пулӗ, пур тӗрлӗ пурăнăçсене пӗрлештерсе „комунисма" йе „сотсиалисма" вырăна кӳртме пулăшӗ. Пирӗн кӗпӗрнере çакăн пек йалсем пур ӗнтӗ, унта пур те тенӗ пекех хурт-хăмăр усраççӗ, кашни çемйе пуçне пӗрер вӗлле хурт тивет. Ку йалсем: Тарлашипе Никольское (хусан уйесӗ). Йалта çакăн ђухлӗ вӗлле пулса хăйсенђен ытлашши пыл йулни курăнмаст пулсан, 4—5 çынлă çемйе пуçне 1 вӗлле тивсен капла пулма та пултарат.

Çак ӗçе тăвассин ђи йывăрри-хурт тупма çукки йе пит кӗске вăхăтра хурт çителӗклӗ йышлăлатса çитерме çукки. Кӗпӗрнере 1918

ҫулта шутласа (ҫырса) тухнӑ тӑрӑх хурт 131.803 вӗлле пулнӑ. 100 ҫынпа 6 вӗлле тивнӗ, урӑхла каласан: 16 ҫын пуҫне 1 вӗлле тивнӗ. Ҫав пӗтӗм вӗллесене кашни ҫемйене пӗрер вӗлле парас тесен те 2-3 хут ытларах кирлӗ. Тата ҫитменнине ҫак хушӑра вӑрҫӑ пулнипе ҫӗмӗрсе, ҫаратса тата ҫавӑн пек ытти сӑлтавсенҫен вӗллесем нумай ҫакрӗҫ.

Тӗрӗс, хуртсене пӗрлешсе усрама пур ҫӗртре те тӑруках тапратмӗҫ, анҫах халӑх ҫак ӗҫ ҫинҫен шухӑшлани хурт-хӑмӑр усрассине аталантарса утарсенҫе вӗллесене йышлӑланма пулӑшӗҫҫӗ.

Хаҫхи хурт хуҫисем хурҫӗсене парса ҫӗнӗ кооперативсене кӗрес пек мана туйӑнаҫ, апла пулмасан та кооперативсене хурҫӗсене сутӗҫ.

Хаҫхи хурт-хуҫисенҫен ҫакӑн пек кооперативлӑ утарсене тӑвас ӗҫе нумайӗшӗ хӑйсем ҫине илӗҫ тесе епӗ шухӑшлатӑп.

Хурт-хӑмӑр тытса тӑракансен Хусанти ушкӑн*) тата унӑн йалти пайӗсем хурт-хӑмӑр туйантарма тата хуртсене пӑхма пулӑшӗҫ.

## Вӗллесене тӑвасси ҫинҫен.

*М. А. Дернов.*

Вӗлле хурҫӗ ӗҫне лайӑх ӑнтарса пырас тесен 1) рамкӑллӑ вӗлле, 2) машшинпа тунӑ карас, тата 3) пыл йухтармалли машшин (медогона) кирлӗ.

Хӑш ҫухне хуртсене рамкӑллӑ мар вӗллесенҫе тытсан та, вӗсене пыл нумайрах тутарма май пур. Анҫах унашкал вӗллесенҫе хуртсене лайӑх асӑрхаса усрама май ҫук. Ҫавӑнпа хӑҫан та пулсан тункаталлӑ вӗллесене пӑрахса, рамкӑллӑ вӗллесенҫе хурт усрама тытӑнас пулаҫ.

Ӗлӗк рамкӑллӑ вӗлле 4—5 тенкӗ анҫах тӑнӑ, хаҫхи саманара ӑна 50 тенкӗпе те тупма ҫук; хӑш ҫухне тем ҫухлӗ укҫа парсан та тупас ҫук, мӗншӗн тесен вӗллесене тӑвас ӗҫ пӗтӗмпех ҫарӑнса ларнӑ, тата ку ӗҫе ӗлӗк те ытла нумайах туман, ӗлӗкех пирӗн вӗллесем ҫитменни сисӗнет-ҫӗ.

Хаҫхи саманара ирӗклӗ суту-илӳ ҫарӑнҫӗ те, вӗллесем пасара тухми пулҫӗҫ. Ҫавӑнпа вӗлле хурҫӗ ӗҫӗшӗн тӑрӑшмалла ҫынсен вӗллесене нумайрах тумалли май тупасси ҫинҫен хытӑ шухӑшлас пулаҫ.

Хаҫиҫҫен илтӗннӗ ҫас-ҫӳ тӑрӑх ҫӗр ӗҫне пӑхса тӑракан халӑх комиссариатӗнҫи выҫӑхсен ӗҫне пӑхса тӑракан пайра ку вӗллесене йепле нумайлатасси ҫинҫен шутлакаласа пӑхнӑ. Унта пӗр йывӑҫ ҫурмалли хапрӑкра вӗллесем тумалла тӑвас тенӗ. Анҫах пӗр хапрӑк ҫителӗклӗ вӗлле тӑваймӗ.

---

*) Казанское Общество Пчеловодства. *Редакция.*

Вырӑс патшалӑхӗнче халӗ 6,000,000 вӗллере хурт семйи пур. Вӗсенчен 13% анчах рамкӑллӑ вӗллесем, ытти 5,220,000 тункаталлӑ вӗллесем. Тата тепӗр алӑ ҫултан тек хуртсене рамкӑллӑ вӗлесене куҫарас пулсан та, кашни ҫул 104,400 вӗлле тӑвас пулать. Халӗ тата вӗллесем пӑсӑлма пултарни ҫинчен аса илер. Пур рамкӑллӑ вӗллесен 5% йурӑхсӑра тухать; ку 5% шутласан, 39,000 вӗлле йурӑхсӑра тухать. Пирӗн хуртсем кашни ҫул нумайланса ырсан, нумай вӗлле кирлӗ пулать. Хуртсем 3% анчах хупаса тӑрсан та, вӗсемшӗн 180,000 вӗлле кирлӗ. Сахалӑн шутласан та, пире пӗр ҫулта 320,000 (104,400+39,000+180,000) ытларах рамкӑллӑ вӗлле кирлӗ. Ҫавӑн чухлӗ нумай вӗллесене пӗр хапрӑк туса ҫитерме пултараймасть. Ҫавнашкал пирӗн Хусан кӗпӗрнинче тата ытти кӗпӗрнесенче те темиҫе хапрӑкра вӗлле тумалла тӑвас пулать. Пирӗн Хусан кӗпӗрни вӗлле тӑвас йенчен тилай чаплӑ вырӑн йышӑнса тӑрать, мӗншӗн тесен кунта 1) вӑрман тилай, 2) хӑма ҫурмалли хысна хапрӑксем сахалах мар, 3) хурт тылакан нумай, 4) тунӑ вӗллесене кирек ӑҫта йарас тесен те ҫул пур: Атӑл, Шур Атӑл, Вятка тата чукун ҫул та пур. 5) кунтах тата вӗлле хурчӗ ӗҫӗшӗн тӑрӑшакан „Казанское Общество пчеловодства" пур.

Ҫавӑнпа Хусан кӗпӗрнинче вӗлле тӑвас ӗҫӗн ӑнса пыма пит пысӑк май пур.

Ҫӗр ӗҫне пӑхса тӑракан пай куп ҫинчен шухӑшласа пӑхӗ-ха тесе кӗтӗпӗр.

Часрах укҫа тупас пулать (вӑл укҫана тен ҫав коммунӑсем валли хатӗрленӗ милиартран илме май пулӗ). Ӗҫе вӑрӑма йамасӑр, часрах пӗр 4—5 хапрӑкра вӗлле тума тытӑнас пулать. Ӗҫ лайӑх ӑнса пытӑр тесен ҫав вӗлле тӑвакан хапрӑксене вӗлле тума лайӑх пӗлекен ӑстасене йарас пулать.

Тата тепӗр йапала ҫинчен манма йурамасть—вӗлле тунӑ чухне пӑта нумай кирлӗ. Хӑш чухне вӗлле тӑвас ӗҫ пӑта ҫукшӑнах чарӑнма пултарать. Ҫавӑнпа пӑтасене халех тупма тӑрӑшас пулать.

Сутас тесен вӗллесене „мелкий кредит касси" урлӑ тата хапрӑкран тӳрех сутма та йурать.

Ку ӗҫре (вӗллесене хатӗрленинче) пийенле тӑкак та ҫук. Каснаран ӗҫ пуҫланӑ чухне анчах укҫа ыйтмалла пулать; кайран вӗллесене сутса пӗтерсен вӑл укҫапа хыспана кайалла тавӑрма пулать. Ҫапла хыспана тӑкак тумасӑрах ырӑ ӗҫ тума пулать. Вӗллесем туса хатӗрленӗшӗн хамӑр кӗпӗрнерн, тата ытти кӗпӗрнери хурт тытакансем те пире пысӑк тав тӑвӗҫ.

Коммунӑсене тунӑ чухне, ҫав коммунӑсенче ҫӗр ӗҫӗн пур турачӗсем те пултӑр тесе тӑрӑшас пулать. Пур коммунӑсенче те утар тӑвасси ҫинчен шухӑшлани хаҫатсем тӑрӑх илтӗнет. Анчах рамкӑллӑ вӗллесем пулмасан, коммунӑсенче утар пулаймӗ, мӗншӗн тесен пур коммунӑсем те рамкӑллӑ вӗллесем илесшӗн. Вӗсене тума май пулмасан, вӗлле хурт ӗҫӗ ахалех чарӑнса ларӗ. Хӑш-хӑш коммунӑсенче

тункаталлă вĕллесенҫе хуртсене тытма шутлĕҫ, анҫах вăл апла лайăх пулмĕ, мĕншĕн тесен коммунăра ĕҫе ăслă, йĕркеллĕ тăвас пулаť.

Халĕ вĕллесем тумалла терĕмĕр, анҫах йепле ҫистемă вĕллисене ҫав хапрăксенҫе тумалла-ши?

Ун ширки ытла нумайах шухăшлама та кирлĕ мар. Мĕнле ҫистемă кирли вăл хăйех паллă. Пирĕн патра йепле ҫистемă нумайрах сарăлнă, ҫавнашкал вĕллесем тăвас пулаť. Вăл ĕҫ ҫинҫен татăклă шутлама ăстасене хушас пулаť. Тен Хусанти вĕлле-хурт упҫи (общество пчеловодства) ҫав ĕҫ ҫинҫен татса—шутласа хурĕ?

Выҫăх-ҫĕрлĕх ĕҫне пăхса тăракан Мускаври Пай Дадан ҫистемĕ вĕлли тумалла тунă. Ку Дадан ҫистемĕ вĕллисем аван, анҫах ку ҫистемăн темиҫе тĕслĕ вĕллесем те пур. Хăш-хăш тĕслĕ Дадан вĕллисем пирĕн хушăра ҫилай сарăлнă, анҫах хăш-хăш тĕслĕ вĕллисем пирĕн патра пĕрре те ҫук. Мускаври выҫăх-ҫĕрлĕх ĕҫне пăхса тăракан пай ҫав пирĕн хушăра ҫук вĕллесене тума хушнă; ҫавăнпа Мускаври выҫăх-ҫĕрлĕх ĕҫне пăхса тăракан пай вĕллесене суйлани майлах пулман.

Епир шухăшланă тăрăх вĕллесене пĕр тĕслĕ анҫах мар, темиҫе тĕслĕ тăвас пулаť. Вара кам йепле вĕлле илес тет, ҫавнашкаллине илме пултараť. Саккас нумайрахăн паракансене—уйесри, вулăсри ҫĕр пайсене, тата кооперативсене, ҫăйсем йепле тĕслĕ вĕлле тума хушаҫҫĕ, ҫавнашкал туса парас пулаť.

Пурăннă ҫемĕн йепле вĕллесем кирли хăйех паллă пулаť.

Вĕлле тăвасси питĕ кирлĕ ĕҫ. Ку ĕҫе вăрăма хăварма йурамаст. Пирĕн патра ку ĕҫе тума аван, ҫавăнпа ăна ыран пайан тенĕ пекех тапратас пулаť. Тăкак нумайах пулмаст, мĕншĕн тесен укҫа ĕҫ тапратнă ҫух хапрăксене майлаштарма анҫах кирлĕ ку ĕҫе тунă ҫух ăна ҫарса тăракан ҫăрмав пулас ҫук пек туйăнаť.

Пурăнасса халăх вĕллесемсĕр те пурăнма пултараť, анҫах вĕлле-хурҫĕ ĕҫĕ пĕтĕмпех пăҫланса ларсан халăха пысăк сийен пулаť, вĕлле хурҫĕсем ҫĕр пăт анҫах мар пин, вуншар пин пăт пылсăр хăварĕҫ. Пыл халҫхи саманара, сахăр ҫук пирки, пит кирлĕ.

Хусан кĕпĕрнинҫе 1908-мĕш ҫулта 130,000 вĕллере хурт пулнă, халĕ ĕнтĕ пĕр 180,000 ытларах пулаť пулҫĕ. Рамкăллă вĕллĕсене 25% шутласан тата рамкăллă вĕллесенҫе хуртсем пыл 10 кĕренке нумайрах анҫах парсан та (лайăхрах асăрханă ҫынсем рамкăллă вĕллесенҫе пыл 12 кĕренке ытларах параť теҫҫе) пыл 37,750 пăт ытларах пулаť, пылăн пĕр пăҫĕ 500 т. тăраť пулсан, ҫав пылтан 16,875,000 тенкĕ укҫа килет. Ку укҫа сахал укҫа мар. Лайăх шутласан ку укҫа тата пысăкрах пулас пулаť, мĕншĕн тесен рамкăллă вĕллен усламĕ 10 кĕренкерен ытларах, хăш ҫух рамкăллă вĕллере тункаталлă вĕллеринҫен 1 пăт ытларăх пыл тухаť; халҫхи саманара пасарта пыл хакĕ 1000 анҫах мар 1500 тенке ҫитрĕ.

Ку укҫашăн епир вилсе каймăпăр; ку укҫа ҫинҫен шутлама-

сан та йурат̆. Анҫах пыл хаҫхи саманара нитӗ кирлӗ, çавӑнпа халя̆ха пылсӑр тӑратса хя̆варас марҫҫӗ.

Çапла ӗнтӗ, вӗлле тӑвасси çинҫен халӗ хыт шухӑшласа пӑхас пулат̆. Епир калани никам хулхине кӗмесӗрех йулмӗ тесе шухӑшлатпӑр.

# КУПӐСТА ЎСТЕРЕССИ.

Иртерех пулса çитекен пахҫари апат - çимӗçсем лартса çитӗнтерекеншӗн йалапах кӑмӑлля̆рах тата вӗсене пасарсенҫе те хакля̆рах параççӗ.

Купӑстана иртерех тӑвас тесен, парникре çитӗнтернӗ калҫана лартаççӗ; анҫах çакӑн пек калҫа ҫас-ҫасах пит аҫӑш пулат̆, çавӑнпа вӑл йӑран çине лартсан куçарня̆ран çанталя̆к наҫар çул сивӗсенҫен те асапланат̆, ку та лешӗ те ӑна ихме ҫарсат ӑраççӗ.

Йӑран çинҫе, уçӑ пӗлӗт айӗнҫе, çитӗнтернӗ калҫа парникре çитӗнниселҫен кайа йулат пулсан та, вырӑна йӑран çине лартсан ҫӑтӑмля̆рах пулат̆,—çенӗ вырӑнта ҫасрах тымар йарса йӑл илет, çавӑнпа парникрипе пӗр вӑхӑтра акнӑ пулсан, парникринҫен иртерех пулса çитет.

Иртерех лайӑх калҫа тумӑшкӑн, купӑста вӑррине çитӗнме кирлӗ майпа акса çитӗнтерес пулат̆. Вӑл майсем ак çаксем: пуринҫен малтан пахҫара пӑртак çўлӗрех, сивӗ çилтен çурт йе сапур сыхлакан вырӑн тупас пулат̆, кӑмӑн кил - картишӗ асля̆рах унта тума йурат̆. Калҫана лайӑхрах ўсме çак вырӑна пуш уйӑхӗпе ака уйӑхӗнҫе кунне 10 сехетрен кайӑ мар хӗвл ўксе ӑшӑтса тӑмалла пултӑр тата йывӑçсенҫен йе çуртсенҫен сулхӑм (ӗмӗлке) ўкмелле мар.

Çакӑн пек вырӑн тупӑнсан, унта кӗркунне кӗрепук тимӗрри тарӑнӑшӗ ытларах шӑтӑк алтса хя̆варас пулат̆, çеремлӗ пулсан, сийелтен çеремне илес пулат̆. Çереме тымарӗсене çўлелле туса пӗр айӑккипе хурӑр, тӑприне шӑтӑкӑн тепӗр айӑккине. Шӑтӑк тӗпне тикс̆с, йака тӑвӑр.

Икӗ йе виçӗ ерне иртсен, кӑларса хунӑ тӑпра сывля̆ш çӑтса çитерсен, ӑна çырмари туйӑнпа хутӑштарӑр. Шӑтӑк тӗпне ытла хуля̆мах мар пӗр пек сапаласа ӗне навусӗ хурас пулат̆; ун çине хя̆варнӑ çереме тымарӗсене çўлелле туса сарса тухмалла, ун çине уля̆мля̆рах, самӑр аван навус (ӗне навусӗ) пӗр пек çыйля̆ сарса тухӑр, лайӑхрах танаштарӑр, пӑртак таптăр, ун çине айаккинҫи тӑпрана лайӑх вӗтетсе сарса тухӑр, вӑл пилӗк вершук хуля̆мӗш пулмалла. Çӗр ытла наҫар пулсан, ун патне лайӑх хура тӑпра çителӗклӗ хутӑштарӑр, компост навусне йе çӗрсе хураласа кайнӑ навуса алапа алласа хутӑштарсан авантарах; çӗр пит кӑпшак йе

çемçе пулсан, ун патне кĕрпеклĕ тăм хутăштарăр. Виçĕ кунтан йе пĕр ерперен çак çĕре айалти навусне кăлармасăр кĕрепукпа пусса тухăр. Çĕр лайăхрах хутăштăр тесе сепкĕпе (сепĕкпе) каскалăр, пăртак курăк навус (торф) хушăр: торф лăм тытать тата вĕт тымарсене хупаттарать. Унтан мĕн пыршшĕ май килеть, çавăн пек йăран тăвăр.

Йăрансене йĕри - тавра кирпĕҫсем, хăма татăкĕсем купаласа папте пек тусан лайăхрах. Йăран туса çитерсен, çунтармап исвĕсе шывпа хăйма пек шĕветсе йăрана сапса тухас пулать. Çакăн пек тупă йăранра ăшăпа лăм çитĕлĕклĕ тараççĕ, исвеслĕ шывпа сапсан, упти вĕтĕ хуртсем пĕтеççĕ, кунран пуçне тата купăста калҫи тымарĕсем ҫирлесрен хăтăлаççĕ.

Çуркунне, йур кайа пуçласан, кăмака кĕлне илĕр те йăран тупă вырăнсене алла виттĕр хулăмрах сапаласа тухăр,—кĕлре купăстана кирлĕ кали йатлă йапала пур, тата кĕлпе йур хăвăртрах кайать. Йăран çинҫе йур кайса пĕтсен, ăна тимĕр кĕрепленe сӳрĕр. —çапла тусан çĕр ҫасрах ăшăнать. Унтан тимĕр кĕрепукпа лайăхрах пусса тухăр та, çийелтен кĕреплепе сӳресе тапаштарса тухăр. кайран вара пуш уйăхĕ пĕтнĕ çĕре йе ака уйăхĕ пуçламăшĕнҫе упта купăста вăрри акăр.

Купăста вăррисене тирĕллех, шӳтерсе тата шăтарса акаççĕ. Тирĕ вăрăсем шăтмасăр нумайтарах выртаççĕ, шӳтернĕ вăрăсем тиршисенҫен пăртак малтантарах шăтса тухаççĕ, шăтарса акнисем тата хăвăртрах. Шăтса тухасси вăрă аванпинҫен, пӳрĕрен, çĕрпе сывлăш ăшшинҫен килет.

Вăрăсене çырма шывĕпе, çумăр шывĕпе йе йур шывĕпе шӳтереççĕ. Кăна валли пĕр стакан шыв илеççĕ те унта 1 лут купăста вăрри йараççĕ, путман вăрăçене кăларса пăрахас пулать *). стаканри шыва тепĕр кунне тăкаççе те вăррисене стаканри шыв пăтранми пулиҫҫен ҫукес пулать. Шӳтернĕ вăрăсене сăмсаланмашкăн тăватă хут хутланă таса, пӳрĕ çĕтĕк-çурăк çине кăларса тăкаççĕ те тăм йе йывăç савăт çине хураççĕ, унтан вара ăшăрах çĕре лартаççĕ: виçĕ кунтан пĕтĕмпех сăмсаланаççĕ. Вăрăсем сăмсалансапах, вĕсем ытла çитĕнсе йе аҫашланса кайасран сивĕрех çĕре хураççĕ. Шӳтернĕ вăрăсемпе те çаплах тăваççĕ,—таса çĕтĕк-çурăкпа ҫăркаса нӳхрепе кайса хураççĕ йе çавăн ҫухнех акма пуçлаççĕ.

Кассăп, кассăн аксан аваҥрах, кăна валли йăрапа тăрăх çинҫерех вĕрен карса хураççĕ те çав вĕрен тăрăх шĕвĕр патакпа йе касă тӳмалли хатĕрпе пĕр пĕрин хушшине 2 вершук хăварса касăсем туса тухаççĕ; çапла касăсем туса тухсан, вĕсене вăрăсем акса

*) Путман вăрăсем те шăтма пултараççĕ, анҫах—путаканнисем пысăккăрах, йăвартарах вăрăсем, кусепҫен патвартарах калҫасем пулаççĕ. Шултăрисене алпа суйласа илесен аван, анҫах ку ĕç ҫăрмавлă.

ҫийелтен ҫӗрпе ҫӳхен витсе тухаҫҫӗ. Иртерех шӑтарас тесен, ку-пӑста вӑррисене сӑмсалантарса аксан аванрах, анҫах пирӗн патра ҫуркунне ирсерен сивӗ пулнӑран, епир виҫӗ тӗслӗ акатпӑр: типӗл-лех, шӳтерсе тата сӑмсалантарса. Ҫапла тума кирлӗ те. Малти ӗрет-сене типӗлле; вӑта-ҫӗртисене шӳтерсе, ҫтена ҫумӗнҫисене—сӑмса-лантарса акас пулать.

Акассипе алпа акас пулать, анҫах мӗнле те пулсан сайрарах, вӑрӑпа вӑрӑ хушши ҫур вершук пулмалла, аксассӑнах ҫав самантах ҫӗрпе пит ҫӳхен витес пулать, вӑрӑсем ҫӗрпе ҫӑтӑр-ҫӑтӑр вырнмашкӑн тӑпра ҫийӗнҫен алпа лӑпкас пулать. Ҫӗр нӳрӗ пулсан шӑварма кирлӗ мар; типӗ пулсан-вӗтӗ алла витӗр, вӑрӑсене шывпа ҫийеле кӑларас-ран пит асӑрхаса, аванрах шӑварас пулать. Пахҫара йур пулсан, шӑварнинҫен йурпа витсе хӑварни авантарах.

Вӑрӑсене ҫапла майпа аксан, ҫур аван килсен, пурте шӑтса тухса тӗрӗс-тӗкел йулсан, калҫасем пӗр пӗрне картласа сулхӑмлатмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен сӑмсаланнӑ вӑрӑсенҫен шӑтса тухнӑ ҫулӗрех калҫасем хыҫалта лараҫҫӗ.

Ӳсӗмлӗ ҫитӗнмешкӗн шӑтса тухнӑ калҫасене ҫителӗклӗ нӳрӗ кирлӗ; нурӗ пур ҫӗртре те пӗр пек тата йаланах пулмашкӑн, курӑк навуса (торф) вӗтетсе пӗтӗм йӑрана ҫӳхе сыйлӑ сарса тухас пулать, ку ҫук пулсан, пӑҫкӑ ҫӑнӑхне кӗлпе тата туйӑнпа хутӑштарса сарса тухсан йурать. Ҫӗре ҫапла витсен, ҫӗр ҫас типсе каймасть, мӗншӗн тесен вӑл ҫӗрти нӳрре пӑсланса пӗтесрен ҫарать, ҫав вӑхӑтрах тата ҫӑмӑр ҫунӑ йе шӑварнӑ ҫухне шыва пит аван сӑхса илеть тата хӑй-ӗнҫи ҫӗре аванлатакан йапаласене ирӗлтерсе калҫасене парать; купран пуҫне ҫак витнӗ навусӑн кӑпшаклӑхӗ сывлӑша ҫитӗнекен йапаласен тымарӗсем патне кӗме ҫармасть тата унӑн айӗнҫе ҫӗр те хытса кай-масть.

Есир ҫак йӑран ҫине купӑста вӑрри пӗр сурт анҫах мар, темиҫе сурт акасшӑн пулсан, йӑрана, кирлӗ пек, миҫе сурт тӑрӑх пӑланкӑ-семпе йе патаксемпе пайӑн пайӑн уйӑрӑр. Патаксен йе пӑланкӑсен тӑршшӗ йӑран сарлакӑшӗ ҫухлӗ пулмалла, вӗсене паллӑ тунӑ вырӑн-сене пӑрахса икӗ пуҫӗнҫен йуплӗ пӑтаксемпе ҫиксе пусарса хурас пулать. Кашни пайӗнҫе малта кӑтартнӑ пек пӗр сурт акӑр тата ӑҫта мӗнле сурт акнине кӗнекӗ ҫине ҫырса хурӑр.

Тупаллӑ купӑста вӑррисене ҫуркунне акнинҫен пуҫне, ҫуркунне валли хура кӗркунне, сивӗсем пула пуҫласан, типӗлле акма йурать. Кӗркунне акнӑ вӑрӑсене ҫур вершук хулӑмӗш вӗтӗ торфпа йе ҫӗрсе ҫитнӗ навуса туйӑнпа хутӑштарса витсе хурас пулать.

Аксассӑн кайран сивӗ тӑрсан тата акнӑ вӑрӑсем шӑтса тухма-сан, вӗсем ҫитес ҫуркунне пит аван шӑтса тухаҫҫӗ. Кӗркунне акнӑ калҫасем ҫуркунехисенҫен ҫӑтӑмлӑрах пулаҫҫӗ тата вӗсенҫен ҫитӗнсе иртсе кайаҫҫӗ. Епӗ ҫакӑн пек суртсене акса сӑнаса пӑхнӑ: Любекски, Сахарккӑ, Брауншвейгски, Улҫмски тата Сабуровкӑ. Ку суртсен вӑр-рисене епӗ Голландиран „Слойспа Гроот“ йатлӑ фирмӑран кӳнӗ.

Вырăн сахал пирки купăста вăрри килте тума ытла аванах мар, мĕншĕн тесен тĕрлĕ суртлă купăста тунисене çывăха лартма йурамаст (вĕсен хушши 5 ђалăшран кайа пулмалла мар), мĕншĕн тесен суртсем хутшăнма пултараççĕ. Ытла та лартасах гесен, пĕр вăрлăха сăнаса суйласа илес пулат те, çавна анђах кашни çул ђи лайăх тунасене суйласа илсе вăрăшăн лартас пулат.

Кĕркунне акнă калђасене те, çуркунне акнисене те пĕр пекех пăхас пулат. Çитĕннĕ ђухне вĕсене вăхăтлă нўрĕ кирлĕ. Вĕсене ытла нўрех те мар, типех те мар тытас пулат. Кирлĕ майĕпе анђах шăварас пулат, ăна та кайран çитĕнсе çитерехпе анђах. Малтанах вĕсене пĕртте шăвармаççĕ, мĕншĕн тесен çĕрте çитĕнме кирлĕ ђухлĕ нўрĕ пур.

Вăрă çулçисенђен пуçне ђăн çулçă иккĕшер кăларсан, вĕсене çăра çĕртрисене сайратма кирлĕ; туртса кăларнă калђасене унтах сайра çĕре, лартас пулат, лартсанах шăварма кирлĕ. Çав вăхăтрах тата çум курăкĕсене çумлас пулат, кайран, пусса илесрен, вĕсене йаланах çумласа тăрас пулат тата шăна - пăвантан сыхламалла. Кун пирки калђасене ирхи сывлăм çинђен томас шлак, пурă, çул çинђи тусана, кипс сапса тухас пулат тата ытти майсемпе те купăста калђисем çинђен сирсе йама кирлĕ. Çуркунне пирĕн патра çанталăк пĕр пек тăмаст,—сивĕ те, ăшă та пулат тата ђас-ђасах каçсерен сивĕсем пулаççĕ; вĕсем çитĕнекен йапаласене сийенлетеççĕ, çитĕнме ђарса йе тата пађах пĕтерсе хураççĕ. Çавăн пек ђухне калђасене ирхине ирех, сивĕлле, хĕвел тухађђен сивĕ шывпа шăварни пит пысăк усă кўрет. Çанталăк кăнтăрла та ăшăтмаст пулсан, вĕсене ăшă йапаласемпе—ракушăпа йе йапаласем ђăркамалли кăвак хутпа витес пулат; çĕрпе витмеллисем хушшинђе пушă вырăн хăвармалла, вара çĕртен хăпаракан ăшă сывлăш пухăнса тăрат те, калђасене шăнасран сыхлат. Витмеллисене тўррех калђасем çине хурсан усси сахал, вĕсем шăнма та пултараççĕ.

Купăста калђисем хур тĕкĕ пек пулсан, вĕсене йăрансем çине куçарса лартас пулат, ытлашши çитĕнтерме йурамаст, тунисем хытса кайаççĕ. Лайăх калђан туни сĕтеклĕ, лутра, тўрĕ, патвар пулмалла.

Купăста йăранĕсене айлăм вырăнсенђе çўлĕрех тумалла, çўлĕ вырăнсенђе—лутрарах.

Ђи шултăра тата кайран пулакан ăратсене çўлĕ вырăнсенђе йе пит типĕ вырăнсенђе йăрансем çине мар, сухапа сухаласа йăрансем тумасăрах лартас пулат, пĕр пĕрин хушшине çуршар аршăн хăварса; вĕсем хушшине хăйарсем лартма йурат. Сутма лартакансем çапла тăваççĕ, вĕсем кунтан икĕ усă кураççĕ,—хăйарсенђен тата купăстасенђен.

Купăста ăраđĕсем пур те уçă вырăна тата лайăх аванлатнă çемçе, кăшт хăйăрла çĕре йуратаççĕ.

Купăста валли хатĕрленĕ вырăна кĕркунне витери çĕнĕ навуспа йе тата „каçхи ылтăмпа“ шăварса кăмакари кĕле сапса тухсан,

çуркунне лартнă ђухне наву стăкмасан та йурат. Çĕре кĕркунне аванлатман пулсан, çуркунне кĕлпе йе навуспа аванлататçĕ, çĕрсе кайнă хура навус авантарах; вырăн ытла пысăккă мар пулсан, алпах тарăнрах пусса тухас пуат; вырăн пысăккă пулсан, суха пуçĕпе, акапуçĕпе, сÿрепе аванлатас пулат, çавăн ђухнех тата исвĕс сапса тухсан аван, мĕншĕн тесен исвĕс купăстана пит кирлĕ.

Çĕре аванлатса тата йăрансене туса пĕтерсен, çĕр хĕвелпе тата сывлăшпа типсе, хытса кайиђђен купăста калђисене ђасрах лартас пулат. Калђасене вырăна лартиђђен лайăхрах шăварас пулат, унтан, шăварсан пăртак тăрсан, сĕтеклĕ, вăйлă тата патвар калђасене суйлас пулат; йулашкисене,—нађаррисене, хытса кайнисене кăларса пăрахаççĕ.

Калђасем валли шăтăксене алпа йе шĕвĕр патакна тăрăн тавас пулат, тымарĕсене хуçкаламасăр вăрăран пулнă çулçăсем таран çĕре лартмалла пултăр. Лартсанах алпа пăртак лăпкаççĕ те шăвараççĕ. Хăш хăш пахђаçĕсем шăтăксене пĕђĕк йывăç кĕреçепе йе пĕђĕк кĕрепукпа тума аван теççĕ; капла туни ђăрмавлăрах пулĕ, анђах хытăрах, йывăр çĕр çинђе капла тусан авантарах. Лартнă ђухне вăрăмрах тымарсене татсан усăллăрах, мĕншĕн тесен, ку курăк-йывăça çитĕнме пулăшакăн вĕтĕ тымарсене хунаттарат.

Купăста калђисене йăран çине лартнă ђухне вĕсен хушшисене ăратне кура хăвараççĕ: иртерех пулакан вĕтĕ купăстасене çуршар аршăн хăварса, вăтаммисене—виçĕ шит йе пĕр аршăн хăварса, шултăрисене—аршăн çурă йе хушшисене хăйар лартсан тата ытларах хăварса лартаççĕ.

Лартассине ылмаштарса, урăхла каласан „хĕреслĕ-мĕреслĕ" лартас пулат. Хĕвĕл пăхнипе шанса кайасран ăмăр (тĕтреллĕ) кун йе каçпарахпа лартсан аванрах. Йăрансем çине вĕтĕрех ăрата тăватă йĕрке, вăтаммине виçĕ йĕрке, ђи шултăрине-икĕ йĕрке лартма йурат; çапах та, вĕсене касă туса ун тăрăх лартсан авантарах.

Лартнă купăстасене çу каçађђен çапла пăху кирлĕ: çумлă курăксене çумлас пулат, вăхăђĕ-вăхăђĕпе купăста тавра çĕре çĕмçетес пулат, икĕ тапхăр купалас пулат, малтан—лартсан виç-тăват ернерен, иккĕмĕш тапхăр тата виç-тăват ернерен.

Ђи малтан купаланă ђухне кашни купăста кутне пĕр ывăç ђăхă йе кăвакарђăн пăхне вĕтетсе çĕрпе хутăштарса хурсан усăллă. Купăстана хурђĕсем тапăнасран йе вĕсем çине çăмартасем туса хурасран асăрхас пулат; çакăн пирки купăста çулçисене пиђђĕн тата тÿнтер йенĕсенђен пăхса тухкалас пулат. Вĕсем унта пулсан, пĕтерес пулат, унсăрăн хуртсене пĕтерме йывăртарах пулат. Ку хуртсен çăмартисем сарă, мăкăњ вăрри пыршшĕ.

Туналлă купăста лăма йуратат пулсан та, малтан анђах шăварма кирлĕ, кайран шăвармасăрах аван ÿсет, çунађĕсем айĕнђе лăма сыхласа; нумайђен уйар тăрсан шăварма кирлĕ. Купăстан çĕр çинђе выртакан айалти çулçисене хуçса илме йурамаст, мĕншĕн

тесен вĕсем купăстана çитĕнме кирлĕ лăма çĕрте тытса тăраççĕ; аманнă тата сарăхса кайнă çулçăсене анҫах хуçса илмелле. Пулса çитнĕ купăста пуçĕсене йăран çинҫе тытма кирлĕ мар. Купăста пуçĕсем çурăлса кайсан та, йăран çинҫе тытма йурамаст, мĕншĕн тесен çурăлнă вырăнпа ҫеҫек кăларакан туна тухат те купăста апата йурамаст.

Шурă туналлă, хĕрлĕ туналлă тата савойа купăстисене çапла пăхмалла.

Киле валли тесен темиçе тĕрлĕ суртсене, пĕлменнисене лартма кирлĕ мар. Ҫас пулса çитейменнисене те пирĕн патра лартсан ытла усăллах мар.

Купăста сурҫĕсем пит пумайĭ, анҫах вĕсем пур те пĕр вырăнта йурамаççĕ, тĕрлĕ çĕр тата тĕрлĕ çанталăк кирлĕ. Хăшĕсем ăшăрах тата çу вăрăм çĕртре аван çитĕнеççĕ, хăшĕсем сивĕрех çĕртре. Пирĕн патра çак суртсем аван пулаççĕ: *Браунивейгский* тата *Сабуровка*.

*Браунивейгски купăста* шурă, йака, пысăк пуçлă. Ҫи лайăх сурт, пур çĕртре те çакна лартаççĕ. Пысăк, çирĕп, лутра туналлă. Йуçĕтме те, ҫĕрĕлле усрама та пит аван. Çĕре тата çанталăка тиркемест, çавăнпа йаланах аван пулат.

*Сабуровка* çӳлĕ туналлă. Ку купăстана сайра лартас пулат. Навуслă ҫи лайăх çĕр кирлĕ. Куп пек çĕр çинҫе вăл пур купăстасенҫен те усăллă, пуçĕ 15 керенкерен 30 кĕрен. çитиҫҫен туртакан пулат. Наҫар, типĕ çĕр çине тата çивĕ вырăна лартма йурамаст, мĕншĕн тесен ун пек вырăнта пулмаст.

---

## КĔÇĔ (кăрҫанкă).

Ҫăвашсем хушшинҫе пит пумайĕшне кĕçĕ тейекен ҫир çыпăçат. Ку ҫир пĕр çынтан тепĕр çынпа куçат. Вăл ҫир йерсессĕн, малтанах пӳрне хушшисем кĕçĕтеççĕ; унтан вара пĕтĕм çан-çурăм тĕлкĕшсе кĕçĕте пуçлат.

Çывăрнă ҫухне, кĕçĕтнипе, вăл йернĕ вырăнсене хыçса ҫавса тататпăр та, вăл вырăна вара кĕсенсем тухаççĕ. Лекĕрсем çав кĕсенсем ăшĕнҫе куçпа курмалла мар хуртсем тупнă (вĕсене пысăккăн кăтартакан кĕленҫе витĕр пăхса анҫах кураççĕ). Вĕсем унта çăмарта туса, ҫĕпĕ кăларса йышлăланаççĕ. Кĕçĕ, емелпе тӳрлетмесессĕн, пĕтĕм çан-çурăма сарăлат те, унта вара хуртсем йăпăлтатса çӳреççĕ, çавăнпа та ӳт, вăл йерсен пит кĕçĕтет. Çав хуртсем кĕсен ăшĕнҫен çийеле ӳпеленсе тухаççе те, пĕр çын çинҫен тепĕр çын çине сикеççĕ. Çавăнпа та кĕçĕллĕ çынтан пит сыхланса çӳрес пулат: унпа йунашар çывăрма, унăн вырăнĕ çине выртма, тумтирне тăхăнма, алă тытса паллашма та йурамаст.

Кӗҫӗ йерсен ҫасрах лекӗр патне кайса тӳрленес пулать. Вӑл ҫир ҫас кайать. Кӑрҫанка тӗрлӗ ҫусемпе тӳрлетеҫҫӗ. Ӑна ак ҫапла тумалла: илес пулать 1 пай „серная мазь“ 2 пай сыспа ҫӑвӗ. Вӗсене иккӗшне пӗрле хутӑштарас пулать. Вара ҫавӑнпа сӗрес пулать. Серный мазь тийекеннине содапа йе супӑне, йе тикӗтпе, хӑш-ҫух супӑнҫпе, пурӑпа пӗрле хутӑштарса серная мазь ҫине йарса сӗреҫҫӗ. Ҫас-ҫасах мунҫа кӗмелле. Кӗпесене сӗлтӗ кӗл шывӗпе ҫумалла.

Тепӗр хут кӗҫӗ ан йертӗр тесен тӳрленсенех, ҫыннӑн кӗпийӗмне, кӗрӗк-сӑхманне, вӑл выртса пурӑннӑ вырӑна вӗретнӗ шывпа хуранта хытӑ пӗҫерес пулать. Ҫапла тусан ҫав вӗтӗ хуртсем пиҫсе виллеҫҫӗ.

## Тин ҫуралнӑ аҫасен куҫӗ пиҫсе тӑни.

Пӗҫӗк аҫасен ҫуралсанах нумайӗшин куҫӗсем пиҫсе тӑраҫҫӗ. Куҫ хӑрпахӗсем шыҫса хӗрелсе кайаҫҫӗ. Куҫӗсем пӳрленсе тӑраҫҫӗ. Аҫа ҫутта пӑхаймасть. Ҫак йапалана вӑхӑтра астумасан, пыра киле аҫа курми пулать. Ку ҫире ҫинҫех тӳрлетме хӗн мар. Пӗр стакан вӗретнӗ шыв ҫине пӗр ҫей кашӑкӗ „борная кислота“ тийекен йапала йамалла. Шывне лӗп туса ҫав шывпа аҫа куҫне кунне виҫ-тӑватӑ хут ҫӑвас пулать. Сийелтен таса тутӑр татӑкне сивӗ шывра йӗпетсе куҫ ҫинҫе тытса тӑрас пулать. Тата улӑм пӗрҫипе куҫне пӗрик тумлам „цинковыя капли“ тийекен емел йама йурать. Куҫ тӳрленни паллах пулмасан, доктора калас пулать.

## Аҫан ҫӑвар ӑш-ҫикки пӑсӑлни.

Ҫӗҫӗ аҫисене таса (ҫисра) усрамасан, ҫӑварӗнҫе шурӑ наймалӑ йапала пулать. Вӑл аҫа тути ҫине шӑл туни ҫине. ҫӗлхи ҫине ларать. Хӑпӑтса илес тесен йун тухать. Ӑна тӳрлетес тесен, шурӑ таса тутӑрпа кунне ик-виҫ хут шӑлса илес пулать. Тутӑрне малтан "борная кислота“ йатлӑ йапала хутӑштарнӑ шыв ҫине ҫиксе йӗпетмелле. Тата глицерина тийекен йапала ҫинҫе те йӗпетме пулать. Пӗр ҫерке (рюмка) глицерина ҫине „буры“ тийекен йапалана ҫӗнӗтсе йарас пулать.

# ВЫЉӐХ-ҪӖРЛӖХЕ ҪИР-ҪӖРТЕН ЙЕПЛЕ СЫХЛАССИ ҪИНҪЕН.

Проф. *И. В. Попов*.

Таҫ сывӑ выљӑх-ҫӗрлӗх анҫах хӑйӗн хуҫине ҫӗр ӗҫлекене хӑй ӗҫленипе, усӑ ытлашипех пама пултарать, ҫапла ӗнтӗ хӑй тӑранса пурӑннӑшӑн тавӑрать. Кӑшт ҫирлесенех, ҫӗрлӗх хӑй ӗҫлессе паллах ҫакарать—йерипен ҫупать, наҫар туртать, сывӑ ҫухнехинҫен сӗт сахал-

тарах парат̆. Хуçисем лайăх пĕлеççĕ, выљăх,—хăрушă тата карта хыçне илсе кайакан ђирпе асапланма пултарат̆; кусем ђирсем выљăхшăн анђах мар, çынсемшĕн те хăрушисем пур. Ку ђирсене—илсе кайакан пĕринђен тепĕрне сикекен ђирсем теççĕ; сăмахран: сап, çĕпĕр ђирĕ, ђахуткă т. ыт. çакăнтан ĕнтĕ килти выљăхшăн етемĕн пит асăрхаса, ђунтан тăрăшма кирли курăнса тăрат̆. Тата выљăх-ђĕрлĕх ўђĕ етемĕн пекеххине астума кирлĕ, çавăнпа пурăнма кансĕрри тата ђир-ђĕр вĕсемшĕн те пĕр пекех сисĕмлĕ. Выљăх „пурне те тўсет“ тесе шухăшлама пађах пăрахас пулат̆, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс мар. Çав тĕрĕс мар шухăш тăрăх ђирленĕ выљăха ђĕртме çамăл, çавăнпа уншăн пит пăшăрханма та çук тесе çынсем шухăшлаççĕ. Анђах выљăха—вăл йанавар пирки (калаçма пултарайман пирки)—етеме сыватассинђен нумай йывăртарах. Кăпавалсемпе вĕрекен-суракансем урăхла ĕнентереççĕ пулсан, выљăхсене вĕсен аллине шанса пама кирлĕ мар. Ĕçе тăвайманççĕ, укçа илеççĕ, вăхăта та иртереççĕ. Пĕлмесĕр, пĕр мухтаннипех нимĕн те тăвайман, кăнавалсемпе вĕрекен-суракансен çакă анђах. Выљăха тăрăшса пăхса тата выљăхсен тађ тусĕ—выљăх тухтăрĕ (ветеринарный врач) кăтартнă имçамсене анђах парса, хуçи хăй вĕсенђен нумайтарах тума пултарат̆. Анђах сыватни пит йўнни те хакла ўкет. Ђирлĕ выљăх тăвакан сийене укçа çине куçарса шутласан, пит паллă тăкак курăнат̆. Сăмахран хурăпăр, ĕне икĕ ĕрне хушши ђирлет те сĕт кашни кун витрен тăваттăмăш пайне-ђетвĕрт—ернере 2 т..40 пус*) сийен пулат̆; сыватнипе имçамшăн панă укçана хушсан, пит нумай тăкак пулат̆. Ĕне нумайтарах ђирлесен тата сĕт пађах памасан, ку тăкак тата нумайтарах ўссе кайат̆. Ђирлĕ лаша та унтан сахал мар сийен тăват̆. Пĕр куп лашапа ĕçленĕшĕн укçа тепкĕрен кайа мар тўлеççĕ, икĕ ернере хуçи 14 тенкĕ**) çухатат̆. Выљăх вилсен семйепе унăн пурлăхĕ ђăтакан çав тери пысăк сийен çинђен епир каламастпăр та ĕнтĕ. Ку инкеке пурăнăç тытса тăракансем пур те аван пĕлеççĕ.

Малта асăннă тата вĕсем пек инкексенђен хăтăлса, выљăхсене ђиртен сыхламашкăн, епир купта çурт-йĕр тытакансемпе аван пăравелăсемпе тума кирлĕ ĕçсем çинђен каласкаласшăн. вĕсене тытса тăрсан выљăх сывлăхне нумайђен сыхлама тата унăн пурăнăçшĕн усăллă ĕçĕсемпе нумайђен усă курма йурат̆. Выљăх-ђĕрлĕх ђирленине малтан систерекен пăравелăсемпе тума кирлĕ ĕçсем мĕнре-ши вĕсем? Епир вĕсем çинђен малта каланă пек, ырă тăрăшса пăхнинђе, урăхла каласан, выљăхсене пит канлĕ пурăнма панинђе пулат̆. Аван. сывлăхлă апат-çимĕç тата таса шыв, таса вырăн, çителĕклĕ канни ўтпўпе тумтире таса тытни, ђирлĕ çынсемпе асăрхаса хăтлани,—ăрас-

*) Халђхи вăхăтра ку ђихвăра 100 хут хăпартас (илес) пулат̆, вара 240 тенкĕ пулат̆.

**) Халђхи хакпа, ку ђихвăрсене 50 хутран кайа мар хăпартмалла, вара 14 тенкĕ мар, 700 тенкĕ пулĕ.

нах сикекен ђирпе выртакансемпе,—ак етеме сывлăхлă тата вăрăм куп-çуллă тăвакан пит кирлĕ ĕçсем. Етем аллинђи йе унпа усă куракан килти выђăх тĕлĕшĕнђеп те çакăн çинђепех тăрăшма кирлĕ. Пирĕн халапа кĕскетме, епир ăна çак пайсем çине уйăрăпăр: 1) тăрантарни, 2) шыв ĕçтерни, 3) уйра тытни (усрани), 4) килте тытни, 5) усă курни тата 6) ђирлĕ выђăха сыхă тыткалани.

## Тăрантарасси çинђен.

Ĕне, лаша тата ытти выђăх тавăрашĕнђе йаланах çавăрăнкалакан хуçа вĕсене йепле тăрантармаллине пит лайăх пĕлет, анђах çапах та апат унăн ĕмĕтне çитерменнишĕн вăл ђас ђасах аптăраса тăрать: ĕне сĕт сахал парать, лаша нађар ĕçлет, хăш ђухне унтан нађар: выђăх „шухăша кайнă пек“ тăрать, вăйсăрланнă пек... Паллă, кунта апат хырăма килĕшмен пулмалла. Ак çаккăн çинђен ĕнтĕ кунта тĕплĕ калаçма кирлĕ. Йывăр, нађар хатĕрленĕ йе пăсăлнă апата çисе тултарсан çын хырăмне аван мар пек туйăнать, çавăн пекех килти выђăх та, ăша йураман апата çисе тултарсан, вăйсăрланать те çавăнпа ĕçе лайăх тума пултараймасть. Мĕн папă, выђăх çавсене пурне те çисе йарать тесен, хуçасем йанăшаççĕ тата выђăх мĕншĕн нађарланнишĕн айăплă пулаççĕ. Выђăха пуринђен ытла улăм, арпа, сахал сĕлĕпе сахал çăнăх тата туранă улăм анђах парсан, паллă, выђăх лайăх ĕçлĕ тесе тата унăн аван сывлăх пулĕ тесе ĕмĕтленме çук. Йывăр апатсем, ăраснах типĕлле парсан, хырăмпа пыршăсенђе аван писеймеççĕ (çĕреймеççĕ), унта кĕрлеççĕ, сывлăшсем нумайлатаççĕ те хырăма кӳпĕнтерсе йарса пит хурлăх кăтартаççĕ. Паллă, ун пек ђухне выђăхсем ĕçлеме те, сĕт пама та, аш валли мăнтăрланма та пултараймаççĕ. Йаланах йывăр (хытă) ăпат панă пирки, выђăх-ђĕрлĕхсем мăн хырăмлăланса кайаççĕ, çавăнпа та, паллă, лайăх ĕçлеме пултараймаççĕ. Йывăр апатсем хырăмра нађар писпĕшĕн анђах мар выђăхсеп вăй ђакать, вĕсем тутă тытманшăн та ђăкать, урăхла каласан, вĕсенђе ӳт валли тăранмалли пит кирлĕ йапаласем сахал. Тĕрĕсрех каласан, йывăр апатсенђе (улăм, арпа, нађар утă) çăмарта шурри йышши йапаласем сахал, йывăç йышши йапаласем нумай. çав вăхăтрах, çăмарта шурри етемшĕн те, выђăхшăн тăрантаракан ђи кирлĕ йапала. Ку каплине пĕлмĕшкĕн, апатра çăмарта мĕне пĕлтернине хуçан астуса илме анђах кирлĕ. Етем пĕр çăмарта, икĕ çăмарта çисеп унăн вăйĕ ђилай хутшăнать, мĕнле пулсан та 1-2 кĕренке çăкăртан нумайтарах вăй кӳртет. Пирĕн килти выђăхсен апађĕсенђе çăмартари пекех шурă пур. Нумай шурăллă. апатсене вăйлă апатсем теççĕ. Пур тĕш тырăсемпе пăрçасем (ыраш, урпа, сĕлĕ, тул тата ыт.), турантă (йĕтĕн, кантăр, мăкăђ, хĕвел-çавăрнăш, рапс т. ы. вăррисен те), çăнăх, вĕтетпĕ улăм тата ыт. çăмарта шурри, вăйлă апатсем. Пуринђен ытла турантă усăллă. Пилĕк йе çиђĕ кĕренке кунне ытти йывăр апатсемпе хутăштарса парсан, выђăха аван латать, пуринђен ытла—сĕт антарать, турантă çăмарта вырăннех тăрат-

Çавӑнпа мӗн пур вӑйпа пурӑнаçра турантӑ хатӗрлесе хума тӑрӑшас пулаť, вӑл пулсан, урӑх вырӑна пама йе сутма пама кирлӗ мар. Хуçисем—вӑйлӑ пахни хакла лараť тесе шухӑшлама пултараççӗ, анђах капла шухӑшлани тӗрӗс мар, авалхисем: Хаклӑ та аван, тесе каланине йаланах астуса тӑрас пулаť. Выђӑхсене вӑйлӑ апатсем паракан хуçасем çавсемшӗн тӑкак тухнинђен темиçе хут ытлашши усӑ килнине каласа кӑтартӗç. Ку усӑ выђӑх сывлӑхӗнђе, вӑл пӗр майах тата аван ӗçленинђе курӑнаť.

Çапах та пађ йывӑр апатсемсӗр те пурӑнма çук, мӗншӗн тесен вӗсем йаланах кил-тавраш ӗнђе çителӗклӗ пур тӑ выђӑхсен кашни кун çимелли апађӗсем хушшине кӗреççӗ. Ӗç çакӑнра: çав апатсене çитернӗ ђухне вӗсене ђас çӗрекен тума тӑрӑшмалла. Малта епир: типӗ апатсем ђас пиçмеççӗ (çӗрмеççӗ) терӗмӗр. çавӑнпа вӗсене ђас пиçекен тумашкӑн тата хырӑмшӑн çӑмӑлтарах пулмашкӑн çемçетме кирлӗ. Апатсене çакӑн пек пӑспа пӗçерсе йе шывпа вӗретсе аванлатма йураť, çакӑн валли хуран йе ӑрасна хатӗр (запарник) туйанас пулаť.



Запарник корма.

Ӑраснах тимӗртен тунӑ „запарник“ аван (ӑна кунта кӑтартнӑ): вӑл вут-кавартан пӗртте хӑрушӑ мар, вырӑнтан вырӑна куçарма çӑмӑл, вутӑшанкӑ сахал кирлӗ тата кирек мӗнле апата та: улӑма, арпана, çӗр улмине, кӑшмана, çарӑка, шӗкӗнтӗре т. ыт. пӑспа ђас пӗçерет.*)

Выђӑх сывлӑхлӑ пулма темиçе тӗслӗ апат пама кирлӗ, мӗншӗн тесен пӗр апатах ђас йӑлӑхтараť; выђӑхсем ӑна йуратса çимеççӗ, çавӑнпа та тӑранаймаççӗ. Улӑма, арпана тата утта тӗш тырӑпа, туранӑ улӑмпа, çӑнӑхпа, турантӑпа, улмапа, кӑшманпа, çарӑкпа, купӑстапа т. ыт. хутӑш парсан тата пӗр ернинђе улма, тепӗр ернинђе унӑн вырӑнне кӑшман, шӗкӗнтӗр, çарӑк т. ыт. парсан, апата темиçе тӗслӗ тума йывӑр мар. Туранта та хутӑштарса пама кирлӗ, сӑмахран, йӗтӗн вӑрринне, кантӑр вӑррине, хӗвел çавӑрнӑшӑнне т. ыт. выђӑха тата унӑн ӗçне кура апат виçине çитиђђен кунне 3-5-8 кӗренке пурне те пӗр тан илсе хутӑштарса парас пулаť. Туранта па-

*) Запарникӑн хутмалли тата ун çийӗнђе апат хумалли хуран пур. Хуран тӗпне пӑртак шыв йараççӗ: шыв пӑс пулса шӑтӑксем витӗр апат çине кайаť. Çӗр улмине луђӑркаса пӗçермелле тунӑ „запарниксем те пур. Тимӗр запарниксен хакӗ пысӑкӑшне кура тӗрлӗ— 60 тенкӗрен пуçласа малалла (вӑрçӑђђен).

раҫҫен çăнăх пек вĕтетсе пусыпкă вырăнне памалла. Çимĕçсем çинҫен асăнса, епир çавăнпа хăйĕпех çав апатсем аваннине, выҫăх-ҫĕрлĕхсемшĕн сывлăхлине тата вĕсене уйсенҫе, пахҫасенҫе акмаллине, пур çĕрте те выҫăхсене пама пуçлама кирлине хуçана кăтартас терĕмĕр.

Выҫăха тутă тăрантарасшăн тăрăшнипе анҫах сахал-ха: апат лайăх пулма кирли çинҫен йаланах астуса тăрас пулат. Пăсăлнă апатсем пама кирлĕ мар: вĕсем выҫăха сийенрен пуçне нимĕн те памаççĕ. Кăмпăсланнă, йӳçĕхне, шăннă, йĕпенсе пĕтнĕ, çĕрнĕ çӳпĕленсе пĕтнĕ, шăршланнă т. ыт. пăсăк апатсене выҫăх-ҫĕрлĕхе пама йурамаст. Çакăн пек апатсем тутă тытмаççĕ анҫах мар, тата варшăн та сийĕнлĕ: вĕсем пуринҫен ҫасрах, апат çӳрекен çулсене пит йĕкĕлтесе (йĕклентерсе), хырăма кӳпĕнтереççĕ, вар витти йертеççĕ, ҫикен ҫиктереççĕ тата ҫас-ҫасах вĕлерекен ытти хурлăхсене кăтартаççĕ. Апата тухăçлă тăвасшăн (ун пек ҫас-ҫасах пулат) тата çав вăхăтрах—выҫăх пурне те ҫăтат тесе шухăшласа çакăн пек наҫар апат çитерсе йараççĕ пулсан, курăнат—вĕсем уншăн пит йăнăшаççĕ те пит пысăк сийĕн кураççĕ.

Сывлăхшăн тата выҫăх ҫĕрĕ пулмашкăн апатпа пĕрле тăвар пани пит усăллă. Ăш-ҫике аван ĕçлеттерме, апат антарма, выҫăхăн вăйĕпе нумайлатма ĕçпе ӳсĕнтерме ернере пĕр-ик хут 3-4 сулатник тăвар апат çине сапсан çитет.

Тата выҫăх-ҫĕрлĕхе апат панă ҫухне йĕрке тытса тăмалла. урăхла каласан, апата паллă вăхăтра памалла, сăмахран: ирхине. кăнтăрла, каçпа. Виçĕ хут апат пăни выҫăх сывлăхне сыхлас йенҫен пит аван тесе шутлаççĕ.

## Шăварасси çинҫен.

Килти выҫăх-ҫĕрлĕхе таса шыв анҫах ĕçтерес пулат тата выҫăх сывлăхĕ йенҫен çак пăравелă пит кирлĕ! Ҫирсем нумайĕшесем выҫахăн анҫах мар етемĕн те, вараланнă, таса мар шыв ĕçнĕрен пулаççĕ. Çакăн пек шыва пĕлме йывăр мар: вăл пăтранҫăк, шăршлă тата тути те аван мар. Шывăн çавăн пек усал паллăсем унта тĕрлĕ йапаласем хутшăннăран пулаççĕ, сăмахран: йушкăнран (пыҫҫăкран), йывăç—курăкран йулнă йапаласем çĕрнĕрен, курăсран, пушăтран, çăмран, пăх-шăкран, татăк-кĕсĕк тăларан т. ыт. Ку сахалха, шывра куçпа курăнми. калама та çук пĕҫĕк, пĕр вырăнта тăракан йе куçакан ҫĕрĕ йапаласем пур, вĕсене бактерисем *) (пĕҫĕк кĕлеткеллĕскерсем) теççĕ, вĕсенҫен вĕлерекен тата сикекен нумайĕшĕ ҫирсем тухаççĕ, сăмахран: тар ҫирĕ, халерă, ҫума, çĕпĕр ҫирĕ т. ыт. Бактерисем ăраснах пĕр вырăнта тăракан шывсенҫе—кӳлĕсенҫе, пĕвесенҫе, йуçлĕхсенҫе—пит хупаççĕ. Мĕншĕн йуханшыва,—

*) Бактерисене пысăклатакан йури хатĕрленĕ кантăк виттĕр анҫах курма пулат. Çакăн хатĕр пур, ăна *микроскоп* теççĕ.

çырмари тата çăл-куç шывне—мала хуни çакăнтан паллă çăлсене таса тытсан, унти шыв та таса пулма пултарать. Пĕр сăмахпа каласан шыв ĕçтермелли вырăнсене таса тытасшăн пит тăрăшас пулать, унта выљăх-ђĕрлĕх виллисене пăрахтарма, таса мар йапаласене тăктарма, пушăт-курăс йĕпеттерме, çăм, тирсем çутарма т. ыт. йурамасть. Çапла сыхлансан, выљăх-ђĕрлĕх хуçисем хăйсен сывлăхне те вĕсен сывлăхне те упрĕç, ђĕрĕ ђуна нумайăн нумайăн илсе кайакан тата сикекен ђирсене тухма памĕç. Пирĕн çуллахи вăхăтра тăтăшах йалĕ йалĕпе ватти-вĕттипех мĕнле те пулин ђирпе асапланаççĕ, ђас-ђасах—вар виттипе; кунăн сăлтавне шыраса тупма тапратсан, кураççĕ—вăл çăлсенђен тата ытти шыв тăракан вырăнсенђен. Выљăх-ђĕрлĕхе усал шыв ĕçтерсен, вĕсем те çаплах ђирлеме пултараççĕ. Çапах та, выљăх сывлăхĕшĕн пит кирли таса шыв анђах мар, вăхăтра пама пĕлни те. Вĕриленнĕ выљăхсене йе çулла кăнтăрлахи шăрăхра никăçан та сивĕ шывпа шăвармa йурамасть *). Лашасем вĕрилле пулни (ĕнесем те вĕрилле пулма пултараççĕ) мĕн иккене хресђенсем нумайĕшĕсем пит лайăх пĕлеççĕ, ун пек ђирлĕ, уксак лашасемпе ĕнесене пăхса, им-çам парса темĕн ђухлĕ асапланмалла пулать тата çитменнине вĕсем ђас ђасах паљах сывалаймаççĕ. Ăшă шыв анђах сийенсĕр. Выљăх-ђĕрлĕхе кунне апат виçĕ хутђен парсассăн, икĕ хут шăвармалла—апат хушшисенђе. Вылăхсене витесенђе шăвараççĕ пулсан шыв ĕçтермелли савăт - сапана сĕлтĕлле йе сутăллă вĕри шывпа лайăх çуса пит таса тытас пулать.

## Картара усрасси çинђен.

Пирĕн выљăхсем çулталăкра уйринђен ытларах килте пурăнаççĕ, çавăнпа, паллă, выљăх-ђĕрлĕх сывă тата ĕçшĕн усăллă пултăр тесен, хуçи вĕсене пурăнма канлĕрех тума тăрăшмалла. Пуринђен малтан, аван картасем кирлĕ, вăл аслă, çутă, çителеклĕ ăшă тата таса пулмалла. Витесене çапла туни, тен, хăш хăш хресђен ытлашши йапалла тесе шухăшлать пулĕ, анђах апла мар, ку—выљăха пурăнма кирли. Çынсем пÿрĕ, тĕттĕм путвалсенђе йе таса мар пÿртсенђе пурăннине выљăх хуçи аса илтĕр... Çакăн пек çуртсенђе пурăнакансем имшер, шурса кайнă тата тĕрлĕ ђирсемпе ђас ђирлеççĕ, ăраснах—сикекен ђирсемпе. Килти выљăх—сикекен ђирсемпе. Килти выљăх-ђĕрлĕх те усал çуртсенђе пађар, имшер, сахал вăйлă пулать, çавăнпа ђире хирĕç тăма пултараймасть, тĕреклĕ мар. Сикекен ђир, таса мар, тĕттĕм, тăвăр витене-картана кĕрсен, кунта нумайлăха йулат, ăна тасатма йе ђире пĕтерме пит кансĕр тăвăт. Ђирс сиктерекен йапаласем (бактерисем) пĕрле картана кĕрсен унтан тухасшăн мар пит хытă тăраççĕ, калама çук ђас хунаса кайаççĕ. Выљăх пуçĕнђен çÿлерех тунă ђуређеллĕ, хăмаран çирĕп таљ сарса, маљђа

*) Шыв Реомÿр кратусникĕ тăрăх 17° кăратусран сивĕ пулмалла мар.

урайлă, усал сывлăша туртакан тăрпаллă, таҫ хупăнакан алăклă, йывăҫран тунă вите йе карта выҫăх сывлăхӗшӗн тата вăл лайăх ӗҫлессишӗн пуринҫен ытла кирлӗ. Ҫтенасене ҫулталăкра пӗрре те пулин исвӗспе шуратни картана сикекен ҫир йересрен (тухасран) ҫарăҫҫӗ, выҫăхсем ҫирлесе йе вилсе выҫăх хуҫисене сийен тăвасран сыхлӗҫҫӗ. Ҫак кирлӗ йапала ҫине кăтартмасан та йурамастă: картара тасине йе таса маррине, выҫăх сыввине йе ҫирлине тата ăна хирӗҫ мӗн тума кирлине ҫутă картара ҫасрах сисме пулатă.

Выҫăх-ҫӗрлӗхе картара усранă ҫух вӗсен ӳтне таса тытни, ăна кашни кун тасатни пит кирлӗ йапалла. Ăна улăм ҫыххипе тасатма йуратă, шҫуткăпа тата аванрах. Выҫăха таса тытни ӳте кӗсенпе, тимрепе, кӗҫӗпе ҫирлеме ҫарса тата ӳте пит наҫарлатакан пыйтăсем йересрен сыхласа, выҫăха сывлăхлă пулма пулăшатă. Таса выҫăхсем йапанах ҫӗрӗ шăм-шаклă, апат лайăх ҫийеҫҫӗ. Ҫавăнпа вӗсем хытăрах, (вайлăрах) усăллă ӗҫленинҫен те тӗлӗнмелле мар. Сӗт сăвакан ӗнесене таса тытсан, таса мар тытнисенҫен сӗт нумайтарах параҫҫӗ. Выҫăхсене тасатни аванни ăнласа илмешкӗн, пирӗншӗн мунҫапа кӗни мӗне пӗлтернине астуса анҫах илес пулатă: мунҫара ҫăвăнсан, ӳте сӗркелесеп, ҫӳҫе туракаласан йе тата ӳте урăх майлă пăхкаласан, ҫын ҫӗнӗрен ҫуралнă пек пулатă. Йулашкинҫен, выҫăх айне сармалишшӗн те тăрăшас пулатă. Ку—вырăн (тӳшек), ун ҫинҫе кунӗпе йывăр ӗҫлесе ывăннă хыҫҫăн выҫăхсем канса хăйсен вăйне ҫӗнетеҫҫӗ. Выҫăх айӗнҫи улăма кашни кун улăштармалла, вăл таса, ҫемҫе, типӗ тата ăшă пулмалла. Ҫакăн тӗлӗшенҫен ыраш улăмӗ аван ăна хӗрхенсе тытма кирлӗ мар. Айне сармалли таса мар, нӳрӗ, хытă тата пăх-шăкпа хутăшнă пулсан, выҫăхăн ӳт-тире, ҫӗрнисем тата ҫиллисем ҫас ҫирлеҫҫӗ, шăнса асапланаҫҫӗ, ку картара нумайҫен выртакан улăмра ытлашши нӳрӗ пулсан пулатă. Улăм вырăнне урăх йапаласем, сăмахран, курăк навус (торф), пăҫкă ҫăнăхӗ, сава турпасси, ҫулҫă т. ыт. сараҫҫӗ пулсан та, ыраш улăмне вӗсенҫен маларах хумалла. Ăна нумайтарах хатӗрлемелле, мӗншӗн тесен вăл выҫăха пит кирлӗ тата ҫав вăхăтрах картари сывлăша таса тытатă. Паллă, епир аван, кампăсланман, типсе кайман, йӗпенсе пӗтмен, пӗр сăмахпа каласан, выҫăха сийенлетекен пӗр кăлтăксăр улăм синҫен калатпăр.

*(Йулашки малалла пулат).*

# ТӲРЕ-ШАРАН САККУНӖСЕМ.

## Тырă акас ҫӗре аслăлантарасси ҫинҫен кăларнă текрет.

Халăх Комиссарӗсен Советҫӗ тырă акас ҫӗре 1919 ҫулта аслăлантарасси ҫинҫен ҫапла хушатă.

1. Тырă акмалли ҫӗрсем уйрăм уйрăм ҫынсен, йе ушкăнсен аллинҫе ахалех выртаҫҫӗ пулсан, вӗсепе хыснана илмелле. Вара

вăл çĕре акас тийекенсене, уйрăм çынсене те, ушкăнсене те 1919-мĕш çулта акма çĕр ĕçне пăхса тăракан Халăх Комиссарĕнҫен ыйтса памалла.

2. Уйрăм çынсен аллинҫи, йе ушкăнсен (коммунăсен, ерттелсен) аллинҫи çĕрсене хуçисем 1919 çулта акса хăвараймаççĕ пулсан, вăл çĕрсене те вăхăтлăха хысна аллине илсе актармалла.

3. 1-мĕшпе 2-мĕш статйасенҫе каланă çĕрсенҫе 1919 çулта пулнă тырă çимĕç ĕçне пăхса тăракан Халăх Комиссариаҫĕ аллинҫе пулмалла.

Хушса калани. Çав çĕрсенҫи тырра ҫи малтан хапрăкпа савăтсенҫе ĕçлекенсене памалла.

4. Тырă акас çĕре йышлăлантарас ĕçе мĕнле тумаллине кăтартса тăмашкăн çĕр ĕçне пăхса тăракан Халăх Комиссариаҫĕ çумĕнҫи Комитет суйламалла. Унта пилĕк çын пулмалла; унăн председатĕнльне Халăх Комиссарĕсен совеҫĕ суйласа лартмалла, ытти тăватă ҫлен: пĕри çĕр ĕçне пăхса тăракан Халăх Комиссариатĕнҫен пулмалла, тепĕри—Халăх пурлăхне пăхса тăракан аслă советран, виççĕмĕш—çимĕç ĕçне пăхса тăракан Халăх Комиссариаҫĕнҫен, тăваттăмĕш—Пĕтĕм Раççейри ĕçлекенсен (профессиональный) сойуссенҫен пулмалла.

5. Çав ĕçе пăхса тăракан Комитет хăйĕн заседанине учрежденисенҫен, организацисенҫен кирлĕ çынсене ҫĕнме пултарать.

6. Çав комитет тунă ĕçсене вырăнти тӳре-шарасен учрежденисем те итлемелле.

7. Çав комитет пилĕк кун хушшинҫе хăйĕн йĕркисене (положение о Комитете посевной площади) кăлармалла. Вара вăл йĕркесене Халăх Комиссарĕсен Советне кăтартмалла.

8. Çав çĕрсем çинҫе тырă акнă ҫухне укçа кирлĕ пулсан, çимĕç ĕçне пăхса тăракан Халăх Комиссариаҫĕнҫен ыйтмалла. Вăл вара кайалла çав тырра пуçтарнă ҫухне çав укçана катса парать.

Халăх Комиссарĕсен Совеҫĕн Председателĕ

**В. Ульянов (Н. Ленин).**

Çĕр ĕçне пăхса тăракан Халăх Комиссарĕ **Середа**.

Халăх Комиссарĕсен совеҫĕнҫи ĕçсене туса тăракан

**В. Бонч-Бруевич**.

Халăх Комиссарĕсен Совеҫĕн çекреттарĕ **Л. Фотиева**.

---

## Хусан кĕпĕрнинҫи çĕрсене аванлатасси çинҫен.

Иртнĕ çулта, ҫӳк уйăхĕнҫе Кĕпĕрнери çĕр ĕçне пăхса тăракан пай, çĕре аванлатса, çĕр ĕçне малалла йама пуçăннă ĕç тĕлĕшпе, хăй çумĕнҫе шыв ĕçĕн ăстине вĕрентекен пай (Гидротехнический подотдел) уçрĕ. Çав пайăн, халĕ, кĕпĕрнери ăхаљ хытă выртакан

ҫӗрсене аванлатма тăрăшас пулаӗ. Ҫав ӗҫе тунă хутрах, подотделăн тата ак мӗнле ӗҫсем тума тăрăшмалла:

1) Ҫӗре мӗнле те пулин аванлатмашкăн май шырас пулаӗ. Ҫавăнпа, вăл ҫӗре сăнаса пӗлмешкӗн, ҫав ӗҫ ҫинҫе вӗреннӗ ăста ҫынсене, техниксене, тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлме ҫӗнес пулаӗ. Вăл ӗҫпе мӗн ҫухлӗ укҫа пӗтсе, мӗнле тăкаксем пулассине, мӗн ҫухлӗ усă пулассине пӗлме тăрăшас пулаӗ. Тата кӗпӗрнери ҫӗрсене мӗнле аванлатасси ҫинҫен йӗрке кăларса, вăл йӗркепе ӗҫлеме тытăнас пулаӗ.

2) Вырăнта кирлӗ тӗрлӗ ӗҫсемте; пур халăх валли усăллă ӗҫсем те пуҫласа йарас пулаӗ; ҫӗр ӗҫӗпе шыв ӗҫне аванлатасси ҫинҫеп тӗрлӗ май шыраса, ҫавсем тăрăх ӗҫлеме тытăнас пулаӗ. Ҫавна тумашкăн, ак мӗн, мӗн тума тăрăшас пулаӗ: а) типсе кайнă ҫӗрсене шывпа шăварас пулаӗ, б) шурăллă, ытлашши шывлă вырăнсене типӗтес пулаӗ, йе шывне йухтарса йарас пулаӗ, в) ӗҫмелли шыв таса пултăр тесен, ҫăлсем ҫавса тума тытăнмалла, г) пӗвесем пӗвес пулаӗ вӗсен хăлхисене татса каймалла тăвас пулмасӗ, пӗвери шыва та таса тăратас пулаӗ, д) анасене хăйăр хӳсе кайасран, ҫырма ҫурăлса пырса, ăна йăтăнса пӗтесрен, тата хăш-ҫухне ҫăл куҫӗсене хăйăр хӳсе кайасран ас тăвас пулаӗ. Тата ытти ӗҫсене те тумалла.

3) Ҫӗре аванлатнипе, шывпа усă курса тăнипе тӗрӗслесе, йӗркеллӗ туса тăрас пулаӗ. Ҫав йапаласенҫен усăллă ӗҫ туса, халăха пулăшма тăрăшас пулаӗ.

4) Кил-хушшинҫи пурăнăҫра шывпа мӗнле усă курса тăмалли ҫинҫен, тата халăха шыв мӗнле парса тăрасси ҫинҫен вӗрентсе каланă йӗрке кăларас пулаӗ.

5) Пур ҫынна та, вăй ҫитнӗ таранҫен ҫӗре аванлатасси ҫинҫен вӗрентме тăрăшас пулаӗ, ҫӗре аванлатакан ушкăнсене коопераци йӗркипе пуҫласа йарас пулаӗ.

6) Ҫӗре аванлатма тăрăшакан ушкăнсене укҫа парса пулăшасси ҫинҫен ӗҫ татса хумалла.

7) Ҫӗре мӗнле майпа аванлатмалли ҫинҫен вӗрентес пулаӗ; ун ҫинҫен малтан халăха ӗҫлесе кăтартас пулаӗ.

Ҫак каланă ӗҫсене вырăна кӳртмешкӗн Гидротехнический подотдел хăй валли, 1919 ҫулта мӗн ҫухлӗ укҫа кирли ҫинҫен шут (смета) ҫырса паҫӗ. Вăл шута Хусан кӗпӗрнинҫи ҫӗр ӗҫне пăхса тăракан пайсен пухăвӗнҫе йышăннă. Вăл шутта малтанхи ултă уйăхшăн 682,658 тенкӗ те 44 пус укҫа кирлӗ. Ҫак ҫулта кӗпӗрнери ҫӗре аванлатас ӗҫе малалла йамашкăн, ҫав ӗҫсене туса тăмашкăн ак ҫакăн пек гидротехниксем (шыв ҫинҫен вӗреннӗ ҫынсем) пулмалла: уйессенҫи ҫӗр ӗҫне пăхса тăракан пайсем ҫумӗнҫе Гидротехнический пай пуҫласа йамашкăн, кашни уйеса пӗрер уйесри гидротехник йамалла. Кӗпӗрнере пӗтӗмпе 12 гидротехник пулмалла.

Кӗпӗрнери ҫӗр ӗҫне пăхса тăракан пайăн Гидротехнический подотдел ҫумӗнҫе технический тиӗекеп пай пулмалла. Унта висӗ инженер, 10 техник пулмалла. Унта ак мӗн мӗн тума укҫа памалла:

1) Кӗпӗрнери йалсенҿе пурӑнакансене шыв кӑларса пама тӑрӑшас пулат. Хӑш-хӑш ҫӗрте шурӑсене типӗтес пулат. Ҫав ӗҫе тумашкӑн ҫултаlӑкӑн малтанхи ултӑ уйӑхшӑн 172,000 тенкӗ кирлӗ;

2) Ҫӗре аванлатас тӗлӗшпе ӗҫлемешкӗн, тата вӑл ӗҫ валли таврашсем тӳрлетмешкӗн—2975000 тенкӗ кирлӗ;

3) Шыва виҫсе, тарӑнӑшне, ытти кирлӗ паллисене те сӑнаса ҫӳреме, тата таврари ҫӗрсенҿи ҫанталӑк ҫинҿен, сывлӑш мӗнле улӑшӑннине вӗрентекен ӑсталӑха вӗренмешкӗн—29600 тенкӗ кирлӗ;

4) Ҫӗре тӗпӗ-йӗрӗпе: тӑпра ҫинҿен, вӑл мӗнле пуҫланса кайни ҫинҿен сӑнаса вӗренмешкӗн 24675 тенкӗ кирлӗ;

5) Мускаври ҫӗре аванлатасси ҫинҿен тӑрӑшакан ушкӑн (О. З. У.). йалсенҿе ҫӗре мӗнле аванлатасси ҫинҿен вӗрентсе ҫӳремешкӗн 20000 тенкӗ панӑ.

Ҫӗр ӗҫне коммунӑ йӗркипе пуҫласа йарас тӗлӗшпе, Советсен ҫӗр ӗҫлекенсен хуҫайствисене пуҫласа йарас тӗлӗшпе, ҫав коммунӑсемпе, ҫӗр-ӗҫлекенсен ерттелсен, ушкӑнсен, Советсен хуҫайствисен ҫӗрӗсене аванлатмашкӑн, ҫӗр ӗҫне пӑхса тӑракан Халӑх Комиссариаҿӗ пӗр миллиард укҫа панӑ. Ҫӗре аванлатас ӗҫре ҫав укҫапа та усӑ курма пулат.

Кӗпӗрнери ҫӗр ӗҫне пӑхса тӑракан пай ҫумӗнҿе Гидротехнический подотдел вӑй илсен, ҫав подотдел тӑрӑшса ӗҫлеме тытӑнсан, ҫитес ҫулта ҫӗре аванлатас ӗҫ малалла кайӗ.

---

# Тума кирлӗ постановленисем.

## Хусан Кӗпӗрнинҿи ҫӗр ӗҫне пӑхса тӑракан Пайран.

Вылҿӑх-ҿӗрлӗхе вӑрманта ҫӳретни ҫамрӑк йывӑҫсене пит пысӑк сийен кӳнине курса, Хусанти ҫӗр ӗҫне пӑхса тӑракан Пай вылҿӑх-ҿӗрлӗхе хӑй ирӗкӗпе ҫамрӑк вӑрмана йанӑшӑн ҫапла тумалла турӗ:

1. Камӑн вылҿӑхне вӑрманта, ҫамрӑк хунав ҫинҿе, тытаҫҫӗ, ҫӑвӑн хыснана кашни вылҿӑхшӑн, шултӑришӗн те, вӗттишӗн те, 50 тенкӗ таран штрав туллемелле.

2. Штравран пуҫне ҫӗр ӗҫне пӑхса тӑракан Пай вылҿӑх хуҫинҿен ҫӗмӗрнӗ, ҫав ҫӗмӗрнӗ йывӑҫсене ҫитӗнтерме мӗн ҿул укҫа пӗтнӗ тата вӑрманта ҫӳретсе урӑх сийен пулнӑшӑн, лесниҿи хак хунӑ тӑрӑх укҫа шырат.

3. Хӑш хӑш йал вӑрттӑн вӑрмана хунав ҫине вылҿӑх йӑнине сиссен, ӑна Рассейра вӑрмансене вылҿӑх йама паҿах ҿараҫҫӗ.

**1. Хусан кӗпӗрнинҫи йалсенҫе навуса ҫырмасене, йал тулашӗсене т. ыт. вырӑнсене усӑсӑр тӑкса сайа йама йурамасҭ.**

2. Выҫӑх ҫӗрлӗх усрасӑ пуҫӑнакан ҫӗр ӗҫлекен ҫыннӑн навуса уйа, пахҫана тата ҫавӑн пек ытти кирлӗ вырӑнсене тӑкмалла.

3. Ҫакна туманшӑн малтанхи хут 500 тенкӗ, иккӗмӗшӗнҫе 1000 тенкӗ, виҫҫӗ мӗшӗнҫе 3000 тенке ҫитиҫҫен ӑштрав тумалла.

4. Уземотделсен, йалти советсен ҫак постановленийе тунине тумаллине астуса тӑмалла.

Хусан кӗпӗрнинҫи ҫӗр ӗҫ пайне пӑхса тӑракан **Гордеев.**

## Лайӑх компост йепле хатӗрлеҫҫӗ.

*И. Ш.*

Компост ҫӗре ҫас аванлатакан ҫит уссӑллӑ йапала.

Компост тӗмӗсем хатӗрлеме нумай майсем пур, анҫах хатӗрлеме аван тесе епӗ ҫакна шутлатӑп: паллӑ вырӑнта, ӑҫта та пулин сулхӑм тата вӑйлӑ ҫил тивмен вырӑнта, пӗр сий ҫӗр (йуҫлӗх ҫӗрӗ пулсан аван) сарса тухмалла, унӑн хулӑмӑшӗ 4—8 вершука ҫитиҫҫен пулаҭ. Ҫав ҫӗр ҫине тӗрлӗ мӑшкӑлтӑк шывсем, апаҭ пӗҫернӗ ҫухне йулнӑ тӗрлӗ пӑрахӑҫсене ҫӳпӗ-ҫапӑсене кӑларса тӑкаҫҫӗ, ҫум курӑксене, кӗл тата ҫавӑн пек ытти йапаласене тӑкаҫҫӗ. Компост валли ӳсекен тата йывӑҫ-курӑк пӑрахӑҫӗсем йураҫҫӗ. Унран пуҫне, вӑй ҫитсен, ӗне пӑх хушни тата исвӗс (исвӗс катӑкӗсем, кивӗ питукаттуркӑ т. ыт.) аван пулаҭ.

Ҫавӑнта тӑкакан йапаласемпе пӗрле тӗм ҫине ҫӗр сахал ленкет пулсан, тӗмсем нӳрӗ пулсан, хушшӑн-хушшӑн ҫӗр хурас пулаҭ (ҫемҫе ҫӗр—½ арш. хулӑмӗш, пирҫев ҫӗре ҫӳхерех).

Анҫах тӗмсем тӑтӑшах ҫителӗклӗ нӳрӗ пулмаҫҫӗ, ҫавӑнпа тӑкнӑ йапаласем тата пӑрахӑҫсем ҫӗрме ҫарӑнса тӑраҫҫӗ; ун пек ҫухне купасене навус шывӗпе, мӑшкӑлтӑк шывсемпе йе тата таса шывпах шӑварас пулаҭ.

Компост купине пуҫласа йарсан пӗр ҫулталӑкран, купа тунӑ, ҫак вӑхӑтҫен ҫурри ҫӗрнӗ йапаласене пӑтратас пулаҭ, шӗвӗр тӑрӑллӑ, тӑршӗ 4 арш. ҫӳлӗш 2 аршӑнтан ытла мар, купасем туса хураҫҫӗ. Ҫапла ҫулне икшӗр хут 2—3 ҫул хушши пӑтратаҫҫӗ; пӑтратнӑ ҫухне компост тӗмӗсене мӑшкӑлтӑк т. ыт. шывсемпе сапсан аван.

Малтан пӑтратсан 2—3 ҫултан компост пулса ҫитет, ун ҫухне купари пур йапаласем те ҫӗрсе ҫитеҫҫӗ.

Малтан пӑтратсанах урӑх купа пуҫласа йарса урӑх йапаласем, пӑрахӑҫсем тӑкаҫҫӗ; ҫапла ӗнтӗ кашни ҫул ҫӗнӗ купасем пуҫласа йарса виҫ тӑват купа ылмаштарса тӑкса хатӗрлесе хураҫҫӗ.

## ХРЕСҪЕН ӖҪНЕ КӐТАРТАКАН КАЛЕНДАРЬ.

### Кил таврашӗнҫипе уйри ӗҫсем.

Пӑсӑлнӑ ҫӗр улмисене суйласа типӗтсе хурас пулать. Суха—ака хатӗрсене тӳрлетсе (йусаса) хурас пулать.

### Сат ӗҫӗ.

Аҫаш улма йывӑҫҫисене, кришовниксене тата хӑмла ҫырли йывӑҫҫисене йурпа купаласа хурас пулать.

### Пахҫа ӗҫӗ.

Тӗрлӗ купӑстасем валли парниксене навус тултарас пулать.

### Ҫӑх-ҫӗп пӑхасси.

Ҫӑхсене пусма лартмаляи йӑвасене тасатса исвӗспе кипӑс хутӑштарса шуратса лартас пулать. Ҫӑх-ҫӗп ҫулла пурӑнмалли вырӑнсене тасатас пулать.

### Выљӑх-ҫӗрлӗх пӑхасси.

Ӗнесене, иртерех пӑрулаҫҫӑр тесе, йерттерес пулать. Ӑратлӑх пӑрусене лайӑхрах ҫитермелле. Сыснасем ҫӑвӑрланипе асӑр-хамалла. Сыснасене ҫӗртмелле.

### Тӗрлӗ ӗҫсем.

Ҫурт-йӗр ҫинҫен йур хырса антармалла. Нӳхрепсене пӑр хывмалла. Вӗлле хурҫӗсене асӑрхамалла.

*(Социал. Землед. календарь).*

## ҪӖР ӖҪЛЕКЕНСЕН ПУРНĂҪӖ.

**Вăрмансене упрасси ҫинҫен.** Тетӗҫри Исполкомра ҫӳк уйăхӗн 22-мӗш кунӗнҫе йул. Борисов уйӗсри ҫынсенҫен пит нумайӗшӗ ҫуртсем тума вăрман ыйтни ҫинҫен доклад тунă. Уйеср а вăрман сахал пирки ҫуртсем валҫи кирпӗҫсем тумашкăн кашни вулăстăра тăватшар кирпӗҫ савăҫӗ тутарас, тенӗ.

Ҫак доклада итлесен, Исполком: кирпӗҫ сарайӗсем тума укҫа тата, кирлӗ таран, вăрман памалла тунă.

Кирпӗҫе валҫи ҫӗр йуракан вырăйисенҫи ҫынсем ҫул ҫуртсем тăвасшăн.

Халăх пурăнăҫне пăхакан пайăн (отдел народнаго хозяйства) кашни вулăстăсенҫе кирпӗҫ савăҫӗсем тума укҫа мӗн ҫул кирлине кăлартмалла.

**Ҫӗр ӗҫлемелли машшинă тумалли мастерскойпа кăрахмалпаткă савăтне уҫни.** Сӗвери ҫӗр ӗҫне тăваках пай хушнипе Гребнев савăҫӗ ҫумӗнҫе ҫӗр ӗҫлемелли машшинăсем тума мастерской тата кăрахмал паткă савăҫӗ тумалла. Кăсем, савăтри ытлашши ҫуртсене панă. Кунсăр пуҫне тата С. С. Якшто агроном тăрăшнипе вăрман памалла тунă.

**Пахҫа ӗҫне вӗренмелли шкул.** Кӗпӗрнери ҫӗр ӗҫ коллекийӗ Сӗве уйӗсӗнҫи Кҫуҫишҫенскри хутăрта пахҫа ӗҫне вӗренмелли шкул уҫмалла, тенӗ. Ҫакăн валҫи Сӗвери уземотделран*) 50 теҫеттин ҫӗр илмелле. Шкул ӗҫне пӗлекен тата кивӗ ҫуртсене йусама укҫа йама наркомземран (народный комиссариат земледелия) ыйтас, тенӗ.

Хутăрта халӗ 18 теҫеттинран пахҫа пур, шкул валли улпут ҫуртҫӗ пур, анҫах вăрçă вăхăтӗнҫе пайтах сийенленнӗ. Ҫул вите, мунҫа, ӗҫлекенсем валли икӗ хутлă ҫурт тата пăхса тăракан валли хăватер пур.

**Ҫурласене тума саккас пани.** Питӗрти халăх Пурлăхин Канашӗ Шветсен Стокхолҫмри савăтне пӗр мӗлиун ҫурла тума саккас панă.

**Ҫӗр ӗҫлемелли машшинăсем туни.** Савăтсенҫен нумайӗшӗсем ҫӗр ӗҫлемелли машшинăсем тума тапратнă тата ҫилай тунă та ӗнтӗ. Ҫапла, Волга — Ока (Атăл—Окка) тийекен савăт иртнӗ уйăхра 3,000 ака пуç тунă, „Новоторския мастерския“ 200 ака пуç тата 210 сăвăрмалли машшина, Таганккăри мастерскойсем 450 тӳшӗм сӳре тунă. Курскри хăш хăш савăтсене, Тереховăн йывăç йакатакан савăтне тата ыттисене те ҫӗр ӗҫлемелли машшинăсем тумалла тунă.

**Вӗлле хурҫӗсем усракансен ушкăнӗ.** Ҫикме уйесӗнҫе Пысăк Караҫкинра халăха кăтартса вӗрентме лайăх утар тăвас тесе вӗлле хурҫӗсем усракансен ушкăнӗ уҫăлнă. Ушкăна „В единении сила“ (Пӗрлешӳре-вăй) йатлă хунă.

*) Уйесри ҫӗр ӗҫне туса тăракан отдела кӗскен калаҫҫӗ. Ред.

Унта ӗçе лайӑх пӗлекен çынсем пӳр Уставне тунӑ. Уйесри совдеп пӑхса тухпӑ та ку ӗçе ырӑланӑ.

**Утарсене çӗмӗресрен сыхламалли хут парасси çинҫен.** Кӑçал кӑрлаҫ уйӑхин 14—мӗш кунӗнҫе Хусан кӗпӗрнинҫи совдеп çумӗнҫи çӗр ӗç пайӗнҫе заседанинҫе икӗ утар хуçисем К. П. Веселингпа Василий Жданов утарсене çӗмӗресрен сыхлама хут ыйтни çинҫен сӳтсе йавнӑ. Хурт-хӑмӑр ӗçне пӗтересрен утар хуçисене утарсене сыхламалли хут Веселингпа Жданова т. ыт. пама кирлӗ тесе каланӑ.

**Ӗпхӳ кӗпӗрнинҫе** Пӳлерте (Билярск) пур йенҫен те вӗрентмелли курссем уçӑлаççӗ. Халӗ çавӑнта вӗренес тийекенсене çыраççӗ. Вӗрентекенсем пур.

Курӑсра пуринҫен ытла хресҫен ӗçне тума вӗрентеççӗ. Респупликкӑ халӑха ӑс апаҫӗ парса, уиран ӳт апаҫӗ илесшӗн.

**Пухса кайнӑ (реквизировать) ӑратлӑх выҫӑхсене тавӑрмалли çинҫен.**—Выҫӑх-ҫӗрлӗхе авапшатас тесе çӗр ӗç коллекийӗ кӗпӗрнери çимӗç ӗçне пӑхса тӑракан комитетран пухса кайнӑ ӑратлӑх выҫӑхсене тавӑрттарма хушма ыйнӑ.


## ПӖЛТЕРНИ.

**Хусан Кӗпӗрнинҫи Ӗç. Хрес. хӗрлӗ-ç. Депутаҫӗн Советҫӗ çумӗнҫи çӗр ӗçне тӑвакан Пайӗ кӑшни ернере кӑларакан сельско-хозяйственный журнал**

**„Казанский Земледелец“**

Хусан Кӗпӗрнинҫе çӗр ӗçлесе пурӑнакан халӑхшӑн с.-х. журнал кӑларма пит кирлӗ. Çӗр ӗçне туса тӑракан пай (земотдел) хӑйӗн, „Казанский Земледелец“ йатлӑ сельско-хозяйственный журнапне кӑларса,—çӗр-шыва лайӑхрах ӗçлесе пурӑнӑçа йепле йусамаллине халӑх хушшинҫе вӗрентсе сарасшӑн.

**Журналӑн хакӗ:**

1919 çулта (52 №) 26 т.
½ çулта (26 №) 13 —
3 уйӑхра (13 №) 6 —
1 уйӑхра (4-5) 2 — 20 п.
Уйрӑм 1 нумӗрӗ — 50 п.

**Редакципе кантурӗн**

адресӗ:

г. Казань, уг. Ново-Горшечной и Ново-Комиссариатской ул., Отдел Земледелия, журнал „КАЗАНСКИЙ ЗЕМЛЕДЕЛЕЦ“.

## ЖУРНАЛ „АНА“ 1919 ÇУЛТА

Нарӑс (февраль) уйӑхӗнҫен пуçласа Хусанта çӗр ӗçне мӗнле майпа авантарах туса тӑмалли çинҫен вӗрентекен, тата Хресҫенӗн ытти ӗçӗсене те каласа ӑнлантаракан ҫӑвашла журнал „Ана“ тухаӗ.

Журнал хакӗ. 1 №—1 т. 25 п., 2 № 2 т. 50 п., 4 № 4 т. 50 п., 6 № 6 т. 50 п.
Адрӗсӗ çапла: Казань, Вознесенская ул., д. № 20.

# ЙУЛТАШСЕМ,

## ТАР ТИРӖНТЕН СЫХЛАНĂР!

Ку ҭир икӗ тӗслӗ пулаТ: шатралли (сыпной тиф) тата вăхăтăн-вăхăтăн тытаканни (возвратный тиф). Сыпнойпа возвратный тиф-сем—пӗр ҫынтан тепӗрне сикекен пит хăрушă ҭирсем. Вӗсене пӗр ҫыпран тепӗрне вӗтӗ хуртсем йертеҫҫӗ, пуринҭен ытла.

## ПЫЙТĂСЕМ.

**Тар ҭирӗ** хулари ҫывăрмалли ҫуртсенҭе, нӗҭӗк хăваттерсенҭе, тӗрмесенҭе, касармăсенҭе, ҫынсем таса мар тата пит нумайăн пурă-накан ытти вырăнсенҭе пит сарăлаТ.

Ҭир сикесрен хамăра сыхлас тесен, **пыйтăсене пӗтерме** кир-лӗ мунҭана тăтăшрах ҫӳремелле, тăтăшрах ҫăвăнмалла, кӗпе-йӗме ҫине-ҫипех улăштарса тăмалла тата пыйтăсем пуласран сыхланмалла.

**Пыйтăсене вӗрипе пӗтерме кирлӗ:**

Тумтирсемпе вытса тăракан таврашӗсене ытла та вӗриех те мар кăмакара пӗҫертес пулаТ.

### Кӗпе-йӗме ухнă ҭухне вӗретме кирлӗ.

Купран пуҫне тумтирсенҭи пыйтăсене вӗри уттукпа уттукласа тухсан пӗтерме пулаТ.

### Пӳрт-ҫурта пит ҭислă (таса) тытма кирлӗ.

Ҭирленӗ ҫынна пуҭпитсăпа леҫес пулаТ, унăн хăваттерне тата йапалисене тухтăр кăтăртнă пек туса ҫав сикекен ҭире пӗтерес пулаТ.

Ăҫта пыйтă—унта сыппойпа возвратный ҭирсем сарăлаҫҫӗ.

Пыйтăланни хăрушă тата намăс та. Пыйтăсем ан пулҭăр тесе тăрăшăр.

ЖУРНАЛ

„ҪӖР ӖҪЛЕКЕН“

РЕДАКЦИНҬЕ

Ҫӗр ӗҫлекен коммунăсене йепле тăвасси ҫинҭен **П. Я. Дышлер** ҫырнă Ҭăвашла кӗнеке тухрӗ. Хакӗ 1 тенкӗ.

Илес текенсен ҫак атреспа ыйтса ямелле: г. Казань, Вознесенская ул., дом № 20 Губер. Чувашс. Секция.

# ОГЛАВЛЕНИЕ.

| | Стр. |
|---|---|
| Суха ӗҫне йалпа пӗрлешсе тӑвассипе erттелсем ҫинҫен . . | 51 |
| Ҫӗре йалпа пӗрле ӗҫлесе усӑ курасси *В. Д.* . . . | 53 |
| Хусан кӗпӗрнинҫе тырӑ-пулӑ акасси ҫинҫен *А. Казаринов.* | 55 |
| Ҫаран ҫинҫи усал курӑксем тата вӗсене йепле пӗтересси ҫинҫен. | 58 |
| Вылӑх-ҫӗрлӗх валли ҫепҫе (вика) ӳстересси ҫинҫен . . | 61 |
| Сат тунӑ ҫухне пит кирлӗ правӗлӑсем. *Н. Рыжов.* . . | 67 |
| Пӗрлешсе хурт-хӑмӑр усрасси ҫинҫен *А. Хабачев.* . . | 71 |
| Вӗллесене тӑвасси ҫинҫен. *М. А. Дернов.* . . . . | 72 |
| Купӑста ӳстересси . . . . . . . . . . . | 75 |
| Кӗҫӗ (кӑрҫанкӑ) . . . . . . . . . . . | 80 |
| Тин ҫуралнӑ аҫасен кусӗ пиҫсе тӑни . . . . . | 81 |
| Аҫан ҫӑвар ӑш-ҫикки пӑсӑлни . . . . . . . | „ |
| Вылӑх ҫӗрлӗхе ҫир-ҫӗртен йепле сыхласси ҫинҫен проф. *И. В. Попов* | „ |
| Тырӑ акас ҫӗре аслӑлантарасси ҫинҫен кӑларнӑ текрет. . | 87 |
| Хусан кӗпӗрнинҫи ҫӗрсене аванлатасси ҫинҫен . . . | 88 |
| Тума кирлӗ постановленисем . . . . . . . . | 90 |
| Лайӑх компост йепле хатӗрлеҫҫӗ. *И. Ш.* . . . . . | 91 |
| Хресҫен ӗҫне кӑтартакан календарь . . . . . . | 92 |
| Ҫӗр ӗҫлекенсен пурнӑҫӗ . . . . . . . . | 93 |
| Пӗлтернисем . . . . . . . . . . . | 94 |
| Йулташсем, тар ҫирӗнҫен сыхланӑр! . . . . . | 95 |

# ПӖЛТЕРНИ.

## САТ, ПАХҪА ТАТА ХУРТ ӖҪНЕ ВӖРЕНТСЕ ҪӲРЕКЕН ИНСТРУКТӐРСЕН ШКУЛӖ.

Пуш уйӑхӗн 15 кунӗнҫе Хусанта сат, пахҫа тата хурт ӗҫне вӗрентсе ҫӳрекен инструктӑрсен шкулӗ уҫӑлать. Шкула ар-ҫынсене, 14 ҫултан ҫамрӑк маррисене, аван сывлӑхлисене илеҫҫӗ, вӗреннӗ тӗлӗшӗнҫен „высшее начальное училище" йе „второклассная учительская школа" вӗренсе тухнисем пулмалла; кимнасира йе „реальное училищӗре" 4 класс пӗтерсе тухнисене те илеҫҫӗ.